Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУЛЬ 18 ТУНТИКУН 164 (4977) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухат̆. *ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ* Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР ХĂРĔСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 8—57, Ред. заместителĕн 8—58, Редакци секретарĕн 7—40, Дежурнăйĕн 6—23

Сойузлă тата Автономлă Республикăсен Верховнăй Совечĕсен ĕçĕсем

Сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсем хăйсен государствăлă пысăк обйазаннăçĕсене пурнăçа кĕртсе пыма пуçанаççĕ. Верховнăй Советсем хăйсен республикĕсенче государствă влаçĕн чи аслă органĕсем пулса тăраççĕ. Çак правана вĕсене Аслă Сталинла Конституци панă.

Грузин ССР, Армйан ССР, Таджик ССР, Бурйат-Монгол АССР Верховнăй Совечĕсен пĕрремĕш çессийĕсем пулса та иртрĕç ĕнтĕ. Российă Советлă Федеративлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Совечĕн пĕтĕм çĕршыв тимлĕн пăхса тăракан пĕрремĕш Çессийĕ ĕçлет; вăл çесси ĕçне Сталин йулташ, партипе правительствă руководителĕсем хутшăннă. Хальхи вăхăтра Казахстан Верховнăй Совечĕн çессийĕ пырат̆, ыран Киргизире тата Азербайджанра çессисем уçăлаççĕ. Ийулĕн 25-мĕшĕнче—Украинăра, Белоруççире, Атăл çинчи Нимĕçсен Республикĕнче, Чечено-Ингуш АСС Республикĕнче уçăлаççĕ. Халăх суйланă çынсем хăйсен хисеплĕ ĕçĕсене тума тытăнаççĕ.

Пулса иртнĕ тата хальхи вăхăтра пулса пыракан пĕтĕм çессисен уйрăмлăхлă палли вăл—вĕсем большевикла ĕçлĕхлĕ пулни. Буржуази хăйĕн парламĕнчĕсене пушă параппан çапмали вырăнсем туса хурат̆. Буржуалă парламĕнтсен пушă сÿпĕлтетĕвĕ вăл совет ĕçĕн пĕтĕм ăшчикĕшĕн йут йапала. Социалисăмлă парламĕнт—çĕршыври чи лайăх çынсен çÿлĕ вырăнта тăракан пухăвĕ, вăл, хăйĕн халăх умĕнчи асларан та аслă ответлăхне пĕтĕмпех ăнланса тăрса, государствă управленийĕн чи пысăк ĕçĕсене ĕçлĕн туса пырат̆. Епĕр хамăрăн çессисенче депутатсен конкретлă та ĕçлĕ содержанилĕ сăмахĕсене илтетпĕр. Верховнăй Советсем ĕçлĕхлĕ пулни Ленин—Сталин партин стилĕпе—революцилĕ сулмаклăха чăн-чăн ĕçлĕхлĕ пулассипе аслă маçтăрлăхпа çыхăнтарса тăракан стилпе пĕр картра тăрат̆. Вырăссен революцилĕ сулмаклăхĕпе американĕцсен ĕçлĕхĕ пĕрлешсе тăнине Сталин йулташ, партилĕ тата государствăлă ĕçри ленини сăм ăшчикĕ пулат̆, тесе каланă.

Çессисен ĕçĕнчи иккĕмĕш пĕтĕмĕшлĕ паллă вăл—пăхса тухакан пур ыйтусене те пĕр çын пек пĕр кăмăллă пулса татса пани пулат̆. Çапла пĕр çын пек пĕр кăмăлла пулни вăл—Совет халăхĕ мораљпе политикă тĕлĕшĕнчен пĕрлĕхлĕ пулнине, пĕрлĕхлĕ коммунисла идеалпа хавхаланса çĕкленсе тăракан, Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ йертсе пыракан рабочи класăн, хресченсен, интеллигенцин интересĕсем пĕр пек пулнине кăтартса паракан сăнар пулса тăрат̆.

Ĕнер РСФСР Верховнăй Совечĕ икĕ йаланлăх комиççи—Саккунсем хăтĕрлекен Комиççи тата Бÿджет Комиççи суйласа хучĕ. Çакăн пек комиççисене ытти Верховнăй Советсен çессийĕсем те суйланă. Вĕсем калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

ССРС Конституцийĕ çапла калат̆: „Сойузлă республикăсен Верховнăй Совечĕ республикăн саккун калакан пĕртен пĕр органĕ пулса тăрат̆" (59-мĕш статйа). „Автономлă республикăн Верховнăй Совечĕ АСС Республикĕн саккун калакан пĕртен пĕр органĕ пулса тăрат̆" (91-мĕш статйа). Саккунсем хатĕрлекен Комиççисем республикăсен саккунĕсене,—вĕсем пĕтĕмĕшпех ССРС саккунĕсенчен тухса тăччăр тесе, вĕсем Аслă Социалисăмлă революци кĕрешсе илнисене сыхласа тăччăр тата халăх прависен хуралĕнче тăччăр тесе,—малтан туса хатĕрлесе хураççĕ.

Бÿджет Комиççи умĕнче те кун таи пĕчĕкех мар задачăсем тăраççĕ. Бÿджет вăл—доходсемпе расходсен планĕ, вăл планра халăх хуçалăхĕн хутшăнса пыракан çитĕнĕвĕсем курăнса тăраççĕ, вăл—средствăсене халăх интересĕсемшĕн лайăхрах усă кÿмеле расходламали план. Бÿджет Комиççийĕ вăл—Верховнăй Советăн йаланах ĕçлесе тăракан органĕ—бÿджетăн кашни доходлă тата расходлă статйине тĕплĕн пăхса тухакан, Верховнăй Совет çирĕплетнĕ хыççăн бÿджет мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине йалан тĕрĕслесе тăрас ĕçе организацилесе тăракан орган.

РСФСР Верховнăй Совечĕн çессийĕнче ĕнер депутатсем Хохлов йулташ докладĕ тăрăх тухса каланă сăмахсем пирĕн крайсемпе облаçсем калама çук пысăк çитĕнÿсем тунине, халăх хуçалăхĕ тата халăх массисен материаллă тата культурăлă пурнăçĕ татти-сыпписĕр ÿссе пынине çĕнĕрен те çĕнĕрен палăртрĕç, вăл массăсене Ленин—Сталин партийĕ коммунисăмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем патне илсе пырат̆.

Верховнăй Советсен çессийĕсем сойузлă тата автономлă республикăсен Конституцийĕсем тăрăх Мандат Комиççисене те уйăраççĕ. Вĕсен ĕçе—депутатсен полномочийĕсене тĕрĕслесси. Грузи, Армени тата ытти республикăсен Верховнăй Совечĕсен çессийĕсенче Мандат Комиççисем тунă докладсем халăх суйласа йанă депутатсен сăн-питне кăтартса параççĕ. Çапла, Грузин ССР Верховнăй Советĕнче 179 коммунист тата 58 çын партире тăманнисем; 178 арçын тата 59 хĕрарăм; депутатсен хисепĕнче—31 орденоносец. Таджик ССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем хушшинче 20 орденоносец. Верховнăй Советсенче—халăхăн тивĕçлĕ представителĕсем, партире тăракан тата партире тăман большевиксем, республикăн йатлă çыннисем.

Мĕн пур çессисем Верховнăй Советсен председателĕсене тата председатель заместителĕсене, Верховнăй Советсен Президиумĕсене суйлаççĕ тата республикăсен правительствисене — Халăх Комиссарĕсен Совечĕсене туса хураççĕ. Пулса иртнĕ çессисенче пуринче те Халăх Комиссарĕсен Совечĕсене шанчине палăртса панă. Çакăн пек шанăç илме сойузлă тата автономлă республикăсен правительствисем большевикла партин политикине ĕçре пурнăçа кĕртсе пынипе тивĕçлĕ пулнă. Ĕçре кирлĕ пек большевикла пуçарулăх, тимлĕх, çине тăрса ĕçлеме пĕлнине кăтартман халăх комиссарĕсене депутатсем вăйлăн критиклеççĕ. Çапла, Бурйат-Монгол АССР Верховнăй Совечĕн çессинче Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн, Çутĕç Халăх Комиссарĕн тата искусствă ĕçĕсен управлени начальникĕн ĕçне критикленĕ. Грузин ССР Верховнăй Совечĕн çессинче Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕн, Суту-илÿ Халăх Комиссарĕн тата уйрăмах Çутĕç Халăх Комиссарĕн ĕçне вăйлăн критикленĕ. Депутат Чарквиани Грузи Çутĕç Халăх Комиссариатне нимĕн те ĕçлеменшĕн, учительсене аттестаци тăвас ĕçе аркатса йанăшăн тивĕçлипе айăпланă. Депутат Еристави Сывлăха сыхлас ĕçе туса пынă çĕрте чылай пысăк çитменлĕхсем пуррине кăтартса панă, уйрăмăн илсен, депутат пĕтĕм Сойузăн пысăк вырăн йышăнса тăракан Цхалтубо пек курортсенче йĕркесĕрлĕхсем пуррине кăтартнă. Суту-илÿ Халăх Комиссарне потребительсене çителĕклĕ таран тимлĕн пулăшманшăн, таварçаврăнăш планне тултарманшăн, вăрласа пĕтернисемпе тата растратăсемпе начар кĕрешнишĕн тивĕçлипе йатлана.

Депутатсем хăйсен критикипе пĕтĕм совет аппаратĕ халăх ыйтăвĕсемпе потребнăçĕсене çырлахтарас тĕлĕшпе большевикла парти вĕрентнĕ пек вăйлăн ĕçлемеле тума тăрăшаççĕ. Депутатсен, хăйсен суйлавçисен ирĕк-кăмăлĕсене пурнăçа кĕртсе, хăйсен кулленхи мĕн пур ĕçĕнче государствă управленин пур органĕсен ĕç пахалăхне йаланах лайăхлатса пырассишĕн тăрăшмала.

Верховнăй Советсен çессийĕсем пĕтĕм халăхăн хастарлăхĕ пысăккăн çĕкленнĕ тапхăрта ĕçлеççĕ. РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çессийĕ йачĕпе ĕççыннисем производствăлă çĕнĕ çитĕнÿсем тăваççĕ. Магнитогорскри малта пыракан металлургсем çесси тĕлне производствăлă заданисене иртерсе тултарнă. Ийуљ уйăхĕн 15 кунĕ хушшинче 2-мĕш номĕрлĕ кăмака доменщикĕсем планран иртерсе 1.600 тоннă чукун, прокатчиксем—3.050 тоннă прокат панă. Кузбасра 1—6-мĕш номĕрлĕ шахтăри горнякĕсем РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çессийĕ уçăлнине талăкри плана иртерсе тултарнипе паллă тунă. Красноярск деповĕнчи машинист Марьин йулташ ийулĕн 15-мĕшĕнче 1945 тоннă йăвăрăш пуйăса Красноярскран Клюквеннайа станцине илсе çитернĕ, нормă тăрăх пуйăç йăвăрăшĕ 1200 тоннă пулмала пулнă. Краснодар крайĕнчи Штейнгардт районĕнчи комбайнĕр Федăр Афанасйев ийулĕн 15-мĕшĕнче „ЧТЗ" йатлă икĕ тракторпа 145 гектар тырпул пухса кĕртнĕ. Канеловск МТС комбайнерĕ Трофим Костенко 152 гектар пухса кĕртнĕ. Çак çитĕнÿсене епĕр ÿстерсех пырăпăр.

Сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсем—ĕçре! Вĕсен ĕçĕсем пирĕн тăван çĕршывăн ăнăçне малалла та тĕреклетсе пыма, коммунисăмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсене тума пулăшаççĕ.

(„Правда" умстатйи, ийулĕн 17-мĕш).

Испани халăхĕ икĕ çул хушши ĕнтĕ фашисăма хирĕç, ирĕклĕхшĕн, демократишĕн паттăрăн кĕрешет

„Испанийе фашисла реакционерсенчен хăтарасси вăл пĕр испанĕцсен хăйсен ĕçĕ çеç мар,—ку ĕç мĕн пур малта пыракан тата малала туртăнакан етемлĕхĕн ĕçĕ".

И. Сталин.

Испанири компарти Тĕп Комитечĕн членĕ, сулăмлă агитатăр Долорес Ибаррури (Пассионарийа)

Испани халăхĕн геройĕсем

Мадрид хапхисем умĕнче, вăрçă лăпланнă кунсенче, салтаксем пĕрпĕринчен ыйтаççĕ.

— Есĕ Хозе Томаса астăватăн-и?

Хозе Томаса маниччен пайтах нумай вăхăт иртĕ. Вăл пулеметчик пулнă. „Йе малта есĕ, йе кайра", —тенĕ вăл. Вăл йаланах малти ретре пулнă. Теплерен пĕрре ăна та тыткăна илнĕ. Фашиссем ăна хăйсен тылне илсе кайнă. Кантăрта çуралнă Хозе Томас кам иккенне вĕсем пĕлсе илнĕ. Вăл вĕсем патĕнчен тепĕр çĕрнех тарат̆, хăйпе пĕрле хăвăрт перекен винтовкă илсе кайат̆.

Пĕр хут кăна тарман вăл. Март уйăхĕнче Арагони фронтĕнче ăна амантнă пулнă. Ун суранĕ тÿрленсе çитмен, çавăнпа ăна госпитаљрен кăларасшăн пулман. Вара вăл чÿречерен сиксе тухнă та фронтра хăйĕн батаљйонне шыраса тупнă.

— Парăр мана ман пулемета,— тенĕ вăл.—Госпитаљрен тарнăшăн есĕр мана, фашиссене хуса йарсан, арĕслĕр.

Ăна сержант туса хунă. Çĕрле капитан çапла каланă ăна:

— Хăвăн отделенипе развĕдка кай. Ташман ăçта вырнаçса тăнине тĕплĕн пĕлес пулат̆.

Вăл отделени пуçĕнче пынă. Бойецсем ун хыççăн, ăна курмасăр унăн урисем чаштăртаттарнă сасса итлесе пынă. Тĕттĕмре ăна тăшмансем хупăрласа илнĕ. Хозе Томас, кăнтăрта çуралнă Испани хресченĕ, пĕр çекундлăха та шухăша кайса тăман. Вăл сас памасан, 18 боец та тыткăна лекеççĕ. Анчах, унăн бойецĕсем пеме пуçласан, вĕсен пуљљисем пуринчен малтан ăна хăйне лекеççĕ...

Вара вăл хыттăн, кăшкăрса команда панă:

— Огонь!

Çапла вилнĕ Хозе Томас.

* * *

Модесто подполковник корпусĕн составне кĕрекен пулеметчиксен уйрăм батаљйонĕнчи вилнĕ бойецсен спискисенче çичĕ йат палăрса тăрат̆. Республикăн çак çичĕ бойецĕсем, пĕр йулташĕ вилсен ун вырăнне черетпе тăрса, пĕр пулеметран персе тăнă.

Ĕç Теруелре пулнă. Вĕсем йурланă: „Епĕр пулеметчиксем, епĕр нихăçан та парăнмастпăр". Вĕсенчен улттăшĕ йулнă, унтан пиллĕкĕш, унтан тăваттăш, унтан иккĕш. Йулашкинчен улттăмĕш вилнĕ. Çиччĕмĕш хыççăн штыксемпе çапăçма пуçланă. Анчах йулашки йулташĕ пеме чăрăнман. Вăл йулашки патрунсене персе пĕтернĕ, унăн пĕр пуљљи те ахаљ çухалман.

Çиччĕмĕшне—фашиссем штыксем çине тăрăнтарса çĕкленĕ.

* * *

Епĕр йачĕсене пĕлмен геройсем пит нумай Испанире, вĕсен йачĕсене тен нихăçан та пĕлеймĕпĕр епĕр. Анчах çав йатсăр геройсем Испани халăхĕн чĕринче пурăнаççĕ.

Естремадурăри пĕр партизан çакăн пек ĕç çинчен каласа пачĕ. Партизансен пысăк мар отрйадне Цељвă тавĕсем çинче пăлхавçăсен отрйачĕ хуса çитнĕ. Çынсене вĕлерес шутпа ухута пуçланнă: çÿлтен—самољотсемпе, çĕр çинчен—пулеметсемпе. Партизансем вырнаçса ларнă тăва илме çăмăлах пулман, анчах вĕсен патрунсем пĕтнĕ. Çапла, пĕррехинче çĕрле, вĕсем патне пăлхавçăсен отрйадĕнчен пĕр салтак пырса вĕсене патрунсем панă. Ирхине вĕсем фашиссен патрунĕсемпе фашиссене хăйсенех пенĕ. Вăл салтак партире тăман рабочи пулнă, вĕсене фашиссем мобилизацилесе вăрçа илсе пынă. Вăл партизансем кĕрсе ларнă вырăнтан тухса кайиччен вĕсем патне патрунсем леççе парса тăнă. Вăл хăйĕн йатне каламан. Вăл ăçта иккенне халь никам та пĕлмест. Анчах партизансем пĕлеççĕ, вăл вĕсене хăтарнă.

Искăран.

Барселонă, ийулĕн 15-мĕш. (ТАСС).

Испанири фронтсенче

Левант фронтĕнче Теруелрен 37 километр кăнтăр хĕвелтухăç йенче выртакан Саррион йалĕ районĕнче пăлхавçăсемпе интервентсем, вăйлă çапăçусене пула, хăйсен позицийĕсене кăштах лайăхлатнă.

Альдор тата Суерос районĕнче (Кастельон патĕнче) вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Республиканецсем кунта темиçе пункт та йышăннă, пуçарăва хăйсен аллинче тытса тăраççĕ.

Ийулĕн 15-мĕшĕнче Еспадан йатлă ту тĕлĕнче сывлăшри çапăçу пулса иртнĕ. Республиканецсем çак çапăçура италийанецсен 9 самољотне персе антарнă.

РСФС Республикĕн пĕрремĕш созыври Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш Çессийĕ

РСФС Республикĕн пĕрремĕш созыври Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш Çессин 1938 çулхи ийулĕн 16-че пулнă ларăвĕ çинчен

Информацилĕ пĕлтерÿ

Ийулĕн 16-мĕшĕнче каçхине 6 сехетре, РСФСР Верховнăй Совечĕн ларăвĕсем пулакан залра, Кремљре, РСФС Республикĕн пĕрремĕш созыври Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш Çессин иккĕмĕш ларăвĕ пулнă.

Ларăва председатель пулса йертсе пыраканĕ —РСФСР Верховнăй Совечĕн Председателĕ депутат А. А. Жданăв.

Пĕрремĕш ыйтупа РСФСР Верховнăй Совет Çессин кун йĕркинчи 2-мĕш пункта—РСФСР Верховнăй Совечĕн йаланлăх комиççийĕсем çинчен калакан пункта пăхса тухаççĕ.

Тамбăв, Свердловск, Кирăв, Смоленск тата Мускав облаçĕсенчи, Башкир, Тутар тата Дагестан Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕсенчи депутатсен ушкăнĕнчен депутат Г. П. Силкин Саккунсем хатĕрлекен Комиççине тăвасси çинчен сĕнÿ парат̆.

Верховнăй Совет Саккунсем хатĕрлекен Комиççи составне 11 çынран туса çирĕплетнĕ.

Комиççи составне суйланаççĕ:

1. Комиççи Председателĕ—Иван Терентйĕвич Гољакăв —Сухиничи округĕнчен суйланă депутат, Смоленск облаçĕ.

Комиççи членĕсем:

2. Александр Иванăвич Гекман—Баљцерск округĕнчен суйланă депутат, Атăл çинчи Нимĕçсен АССР.
3. Зойă Ананйĕвнă Андрейĕвă—Çĕрпÿ округĕнчен суйланă депутат, Чăваш АССР.
4. Иван Корнейĕвич Седин—Кăмĕнчк округĕнчен суйланă депутат, Тамбăв облаçĕ.
5. Марк Васйлйĕвич Горбачов—Прионежск округĕнчен суйланă депутат, Карел АССР.
6. Абдул Джелил Хайрулла Менбарийĕв—Джанкой округĕнчен суйланă депутат, Крым АССР.
7. Клавдийа Андрейĕвнă Зимина—Смољнăй округĕнчен суйланă депутат, Ленинград хули.
8. Михаил Петрович Кирейĕв—Ленинград округĕнчен суйланă депутат, Мускав хули.
9. Галийа Гиљазĕвнă Измайлăвă—Буинск округĕнчен суйланă депутат, Тутар АССР.
10. Владимир Александрăвич Иершов—Северск округĕнчен суйланă депутат, Краснодар крайĕ.
11. Матвей Федăрăвич Шкирйатăв—Тула йал округĕнчен суйланă депутат, Тула облаçĕ.

Мускавпа Ленинград хулисен, Чељабинск, Свердловск тата Новосибирск облаçĕсен, Инçет-Хĕвелтухăç крайĕн, Чечено-Ингуш тата Калмык Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕсен депутачĕсен ушкăнĕнчен депутат Д. И. Антонăв РСФСР Верховнăй Совечĕн Бÿджет Комиççине тăвасси çинчен панă сĕнÿве РСФСР Верховнăй Совечĕ йышăнат̆.

Бÿджет Комиççине 13 çынран суйлаççĕ:

1. Комиççи Председателĕ—Иван Алексейĕвич Власăв—Веневск округĕнчен суйланă депутат, Тула облаçĕ.
2. Пелагейа Иванăвна Иванова—Балезинск округĕнчен суйланă депутат, Удмурт АССР.
3. Иван Николайĕвич Куприйанăв—Атăшевск округĕнчен суйланă депутат, Мордва АССР.
4. Рахим Кирейĕвич Ибрагимăв, Мелеуз округĕнчен суйланă депутат, Башкир АССР.
5. Джамалутдин Махмудăвич Магомедăв—Левашинск округĕнчен суйланă депутат, Дагестан АССР.
6. Александр Павлăвич Староторжский—Бологовск округĕнчен суйланă депутат, Калинин облаçĕ.
7. Александр Илларионăвич Йефремăв — Ульйанăвск округĕнчен суйланă депутат, Мускав хули.
8. Николай Васйлйĕвич Жильцов—Лужск округĕнчен суйланă депутат, Ленинград облаçĕ.
9. Иван Михайлăвич Груздĕв—Уржум округĕнчен суйланă депутат, Кирăв облаçĕ.
10. Аркадий Александрăвич Филиппăв—Иркутск-Кирăвски округĕнчен суйланă депутат, Иркутск облаçĕ.
11. Николай Николайĕвич Журављов—Карсун округĕнчен суйланă депутат, Куйбышĕв облаçĕ.
12. Федăр Кириллăвич Çеменăв—Асбестовск округĕнчен суйланă депутат, Çвердловск облаçĕ.
13. Марийа Васйлйĕвна Сарычĕвă—Загорск округĕнчен суйланă депутат, Мускав облаçĕ.

Верховнăй Совет кун йĕркин 3-мĕш пунктне—РСФСР Конституцин хăшпĕр статйисене улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен калакан пункта пăхса тухасси çине куçат̆.

Кун йĕркин 3-мĕш пункчĕ тăрăх депутат И. С. Хохлов доклад тунă.

Доклад тăрăх пренисенче депутатсем В. И. Бойцов (Почепск округĕ, Орйол облаçĕ), А. А. Филиппăв (Иркутск-Кирăвски округĕ, Иркутск облаçĕ), Г. И. Овчинникăв (Харовск округĕ, Вологда облаçĕ), В. А. Йершов (Северск округĕ, Краснодар крайĕ) тухса калаççĕ.

Пренисем пĕтнĕ хыççăн, РСФСР Верховнăй Совечĕ Конституцин хăшпĕр статйисене кĕртме тăрат̆на улшăнусемпе хушусене уйрăммăн статйа тăрăх вулама тата сасăлама тытăнат̆.

РСФСР Верховнăй Совечĕ Конституцин (Тĕп саккунĕн) хăшпĕр статйисене улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен çакăн пек постановлени йышăнат̆:

„РСФСР Конституцин (Тĕп Саккунĕн) 14, 47, 54, 69, 92, 93, 96 тата 99-мĕш статйисене улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен

Российă Советлă Федеративлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Совечĕ çапла йышăнат̆:

1) Российă Советлă Федеративлă Социалисăмлă Республикĕн составĕнче: Алтайпа Краснодар крайĕсем, Архангельск, Вологдă, Иркутск, Новосибирск, Орйол, Ростов, Рйазань, Смоленск, Тамбăв, Тула, Чит[illegible] облаçĕсем тăвасси çинчен ССР[illegible] Конституцин 22 мĕш статйине [illegible] шăнусем кĕртнĕ май, çавăн пе[illegible] тата ССРС Верховнăй Сов[illegible] Президиумĕ Мурмăн облаçĕ т[illegible] си çинчен кăларнă указ т[illegible] РСФСР Конституцин 14 мĕ[illegible] йине çакăн пек çырас:

„14 статйа. Российă [illegible] Федеративлă Социалисă[illegible] публикине çаксем кĕреçç[illegible] сем—Алтай, Инçетри Хĕ[illegible] Краснодар, Красноярск [illegible] никидзе; облаçсем: Ар[illegible] Вологдă, Воронĕж, Горьк[illegible] ново, Иркутск, Калинин, [illegible] Куйбышĕв, Курск, Ленин[illegible] Мускав, Мурмăн, Новосиби[illegible] Омск, Оренбург, Орйол, Росто[illegible] Рйазань, Саратăв, Çвердловс[illegible] Смоленск, Сталинград, Тамбăв, Тула, Чељабинск, Чита, Йарослављ; Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикăсем: Тутар, Башкир, Бурйат-Монгол, Дагестан, Кабардино-Балкар, Калмык, Карел, Коми, Крым, Мари, Мордва, Атăл çинчи Нимĕçсен, Çурçĕр Ос[illegible] Удмурт, Чечено-Ингуш, Ч[illegible]кут; Автономлă облаç[illegible]й, Йеврей, Карачай, [illegible]асс, Черкес".

[illegible] Конституцин 70,77 та[illegible] статйисене улшăнусем [illegible]—РСФСР Конституцийĕ[illegible]не улшăнусем кĕртес: [illegible]атйăра „Шалти суту[illegible]не „Суту-илÿ" сăмах[illegible]ас. „ССР Сойузĕн за[illegible] комитечĕн уполномо[illegible]ăмахсене кăларса пăра[illegible]

[illegible]96 тата 99-мĕш статйисен[illegible]ти суту-илÿ" сăмахсене [illegible]" сăмахпа улăштарас;

[illegible] статйăра „Шалти суту[illegible]ахсене „Суту-илÿ" сăмахпа[illegible]с тата „Заготовкăсен [illegible] уполномоченнăйĕ" сă[illegible]ССР Сойузĕн Заготовкă[illegible] Комиççариачĕн Уполно[illegible]" сăмахсемпе улăштарас, [illegible]статйăра „Заготовкăсен [illegible] ĕççынни депутачĕсен[illegible]) Совечĕсем çумĕнче [illegible]омочĕнийĕсене уйăрса [illegible]ахсене кăларса пăра[illegible]

[illegible]е тунă хыççăн РСФСР [illegible]овнăй Совечĕн пĕрремĕш Çес[illegible] ларăвĕ хупăнат̆.

Тырпул тăкакĕпе кĕрешесси—

кашни колхозникĕн, комбайнерăн, трактăрисăн, çĕрĕç работникĕн тĕп задачĕ

Жнейкăсемпе туллин усă курмала

ЙĔЛЧĔК, ийулĕн 17-мĕшĕ (хамăр корр., телефонпа). Район ăнса пулнă тырпула 5-мĕш кун вырат ĕнтĕ. Вĕсен малтанхи чи лайăх тырра çапса государствăна леçсе пама вăхăт. Анчах нумай колхозсенче итемсене касса тасатса хатĕрлемен-ха.

„Красный часовой" колхоз районта малта пыракан колхозсенчен пĕри шутланат пулсан та, пайанхи куна çитсе те итемсене касса хатĕрлемен. Тырпул хумали 9 ампартан пĕрне те дезинфекци туман. Аслă Тайапа колхозĕ те авăн çапма хатĕрленмен, ампарсене те дезинфекцилемен.

„Сатурн" колхозăн уйхирĕнче тырпулсем ийулĕн 14-мĕшнех пулса çитнĕ, анчах ийулĕн 15-мĕшĕнче 5 бригадăран 1 бригадă çеç тырă вырма тухнă. 8 жнейкă ĕçлемесĕрех ларнă.

„Новый путь" колхозри 2-мĕш бригадăн жнейки тырă вырма тухнă кунах çĕмĕрелнĕ.

Ку колхозра тăкаксемпе кĕрешмеççĕ, вырăнĕ-вырăнĕпе тăваткал метр çĕр лаптăкĕ çинче 30—40 пучах тăкăнса йулат.

Кĕçĕн Йелчĕкри „Октăбĕр" колхозăн уйхирĕнчи тырпулсем пиççе çитнĕ; анчах кунта бригадирсемпе правлени тивĕçлипе йертсе пыманнипе тырă вырма тухма васкамаççĕ.

Т. Майорăв.

14 колхозра тырă выраççĕ

ТĂВАЙ. Районри 14 колхозра тырă выраççĕ. Комбайнсене ĕçлемели вырăнсене илсе пынă. Ийулĕн 17-мĕшĕнче Мучарти колхозра комбайн ĕçлеме тытăннă.

„Çĕнĕ çул" колхоз тырпулсене пухса кĕме лайăх хатĕрленсе тухрĕ. Кунта çĕнĕ тырра йышăнма ампарсене хатĕрленĕ. Авăн çапма итемсем хатĕр. „Çĕнĕ çул" колхозра жнейкăсемпе туллин усă кураççĕ. Аçанăв машиновед çменă хушшинче жнейкăпа 8 гектар вырса пырат.

„Горьковская коммуна" колхозра кулътмассăлă ĕçе уйра аван туса пыраççĕ. Каннă вăхăтра политвулавçăсем колхозниксене тĕрлĕ çĕнĕ хыпарсем çинчен ăнлантарса параççĕ. Колхозра столовăй та йаçлĕ ĕçлет.

И. Йефимăв.

Шмагин комбайнер-стахановец

Кăçал Йĕпреç районĕнче 10 комбайн ĕçлемеле. Халĕ комбайнсене йусаса колхозсене йанă. Комбайнерсем вăйлă тырпула пĕр тăкаксăр, кăтартулăн пуçтарса кĕртессишĕн кĕрешме пĕр-пĕрне социалисăмлă ăмăрту догăвăрĕ тунă.

Чи паллă комбайнер-стахановец И. Шмагин иртнĕ çулта „Коммунар" комбайнпа 312 гектар пухса кĕнĕ пулсан, кăçал 600 гектартан кайа мар пухса кĕме обйазательствă илнĕ.

Шмагин йулташăн пĕлтĕр комбайнпа 240 гектар çинчен пуçтарса кĕртмеле пулнă. Вăл комбайна лайăх вĕренсе çитсе сезонри ĕç нормине ытлашшипех тултарса, республикăра паллă комбайнерсенчен пĕри пулса тăчĕ. Шмагин йулташа уйри тырпула лайăх пахалăхпа тата кăтартулăн пухса кĕнĕшĕн—Совет Сойузĕ тăрăх екскурçине каймали путовкăпа премиленĕ.

— Епĕ екскурçинче чапа тухнă орденоносец-комбайнерсемпе çӳрерĕм, вĕсен паха опычĕсемпе паллашрăм. Вĕсем каласа панă тăрăх, пирĕн район условинче те пĕр комбайнпа 600—700 гектар пухса кĕме май пур. Çапла вара, екскурçинчен хама çирĕплетсе пана комбайнпа 600 гектартан кайа мар пухса кĕртес шутпа таврăнтăм,— тет Шмагин йулташ.

Шмагин йулташ комбайнпа ĕçленĕ вăхăтра чăрмавсем ан пулччăр тесе, хăй ĕçлемели участокĕсене çумкурăкран тасаттарнă. Вăл комбайн пĕр чарăнмасăр, кăтартулăн ĕçлетĕр тесе, çĕмĕрелсен кирлĕ пек пайсене илсе хатĕрленĕ.

Вăл тырра бункертан пушатса пымала тавас шутпа бункер çумне площадкă тунă.

Дм. Михайлăв.

1055 гектар вырнă

Ийулĕн 17-мĕшне Шăнкăртам районĕнче пур колхозсем те тырă вырма тухнă. Çавнашкалах пур комбайнсем те ĕçлеме тытăннă. Ийулĕн 17-мĕшне районри колхозсем 1055 гектар ыраш вырнă, йе вăл 22 процент вырнă пулат.

„Çăлтăр" колхоз государствăна тырă пама авăн çапма хатĕр тăрат. Итемсем йусавлă.

Ишаков.

Ĕçе тĕрĕс организацилени кирлĕ

ПАТĂРЙЕЛ, ийулĕн 16-мĕшĕ (телефонпа). Вăтайелĕнчи Кирăв йачĕпе тăракан колхоз ыраш вырма ийулен 14-мĕшĕнче тухнă. Колхозра тырă вырнă вăхăтра чăрмавсем ан пулччăр тесе, пĕрле апатланмали столовăй организациленĕ.

6 жнейкăпа икĕ кун хушшинче 65 гектар çинчи ыраша вырнă. Çапла вара, пĕтĕм колхозĕпе ыраш вырас плана 27 процент тултарнă.

Çакăнпа пĕрлех чылай çитменлĕхсем те пур-ха. Ачасем ĕç вăхăтĕнче амăшĕсене чăрмантараççĕ. Вĕсем валъли ача площадки уçнă пек тунă та, продуктăсем çителĕклĕ хатĕрлемен пирки площадкă йĕркелĕ ĕçлеймест.

Кăнтăр канни вăхăтĕнче нимĕнле кулътурăлă-массăлă ĕç те çук. Пиçмоносец Плечов Илйа хаçатсене уйа леçсе памаст. Килнĕ хаçатсене те 1—2 кун килĕнче вырттармасăр салатмаст.

Çавнашкалах йалти йалпо лавки те уйхирте ĕçлекенсем патĕнче суту-илӳ организацилемен. Приказчик уйа тухма мар,—йалти лавкана та 2 кун хушши пырса курăнман, халъ уйри тырпула пухса кĕнĕ вăхăтра урапасене тата йалхуçалăх машинисене сĕрмели йапаласем кирлĕ. Йалпо çавсене кӳрсе килмен, кӳрсе килме те васкамаççĕ.

Йанвар уйăхĕнчен пуçласа пайанхи куна çитсе те колхозниксен ĕçкунĕсене ĕçкĕнекисем çине çырса паман.

Тăрăн йалĕнчи Роза Лъуксембург йачĕпе тăракан колхоз тырă вырма нимĕн хатĕрленмесĕр тухнă. Тĕплĕн хатĕрленсе çитменнине пулах, 5 жнейкăран 2 жнейкă кăна ĕçе йурăхлă. Вĕсенчен те пĕри вырма тухнă кунах çĕмĕрелнĕ.

Колхозăн 11 ампар, иккĕшне çеç дезинфекци тунă. Кунта тăкаксемпе кĕрешмеççĕ. Уйра кашни пĕр тăваткăл метр çĕр çинче 8 пучах тата 20—21 пĕрчĕ тырă тăкăнса йулат.

Н. Пушкин.

Государствăна утă тăратас ĕçе кайа хăвармала мар

Колхозсем утă çулса пуçтарса кĕртрĕç. Кăнтăр йенчи районсенче кĕрхи тырăсене те вырма тухрĕç. Анчах государствăна утă тăратас ĕç çинчен Трак районĕнче манса кайнă. Иртнĕ çул кĕркунне, çул пăсăлсан тин утă турттарнăччĕ. Кăçал та çапла пулат пулас, Хатĕрлевсен Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ колхозсем государствăна тăратмали утана ăçта турттармалине пайан куна та кăтартса паман.

Утăна халъ, капана хывиччен тата уйра хĕрӳлĕ ĕç вăхăчĕ пуçланиччен леçсен пит лайăх пулатчĕ. Халъ утă пахалăхĕ те пит лайăх, лашасемпе колхозниксем те пушăрах, çул та аван. Çавăнпа Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕн кашни колхоз кăçал мĕн чухлĕ утă тата ăçта леçмелине халех кăтартса памала.

Н. Илйин.

Государствăна тырă тăратас ĕçе йертсе пырассине вăйлатмала

ССР Сойузĕн правительстви кăçалхи çулăн ийулĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа колхозсене 1937 çулти тырпула государствăна 1938 çулшăн пама ирĕк пачĕ. Правительствă çакăн пек туни—колхозсене государствă умĕнчи обйазательствăна—тырă тăратас ĕçе хăвăртрах тума пулăшат тата çăмăллатат. 1937 çулти тырă пур колхозсем çĕнĕ тырра пухса кĕме тытăниччен государствăна тырă парса татма пултараççĕ, çавна май çĕнĕ тырра хума складсене пушатаççĕ.

Правительствă решенийĕ партипе совет тата хатĕрлев организацисем çине пысăк ответлăх хурат. Вĕсен 1937 çулти тырпула 1938 çулшăн илессине организацилемеле тата çĕнĕ тырра йышăнма тĕплĕн хатĕрленмеле.

ССР Сойузĕн правительствин решенийĕ май, ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе Парти Чăваш Обкомĕ кăçалхи çулти ийулĕн 8-мĕшĕнче йышăннă тăрăх пур райĕçтăвкомсене, парти райкомĕсене тата ССР Сойузĕн хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Чăваш республикĕнчи уполномоченнăйне çаксене тума хушнă:

а) ССР Сойузĕн правительстви йышăннă решени мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине пур колхоз руководителĕсене ăнлантарса памала, халех 1937 çулти тырăран 1938 çулхи обйазательствăсем тăрăх государствăна тырă тăратассине организацилемеле;

б) Пур колхозсене те чи паха тырра çеç—типĕ, таса, клешчсем йермен тырра пама кирли çинчен ăнлантарса пама хушнă. Государствăна памали тырра лайăх тасатмала, сортировкă витĕр кăлармала;

в) 1937 çулти тата 1938 çулти тырра йусанă тата дезинфекци тунă складсене уйрăм хума кирлĕ;

г) Тырă паракансене вăхăтра тата тĕрĕс расчот памала, тырă паракансем хушшинче кулътурăлă-массăлă ĕçе туса пымала.

Çаксем пулаççĕ ĕнтĕ халъхи вăхăтра партипе совет тата хатĕрлев организацисен умĕнче тăракан задачисем.

Правительствă решенийе колхозсем тата колхозниксем патне хăвăртрах çитерне çĕрте колхозсем 1937 çулти тырпула государствăна пама тытăнчĕç. Анчах уйрăм районсем ку тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ, государствăна тырă парассине организацилемеççĕ.

Уйрăм районсенче тырăсене лайăх тасатмасăрах государствăна пама илсе кайнă, анчах вĕсене йышăнман, кайала йанă. Ийулĕн 11-мĕшĕнче Патăрйел районĕнчи „Октăбĕр йалавĕ" тата Кирăв йачĕпе тăракан колхозсем, çавнашкалах Шăхасан районĕнчи „Большевик" колхоз 1937 çулти ыраша тата сĕлĕне 1938 çулшăн пама Заготзернон Канашри пунктне илсе пынă. Анчах вĕсен тыррисем çинче клешчсем пулнă. Çавăнпа вĕсене кайала йанă. Патăрйел тата Шăхасан районĕсен урокне пур районсен те шута илмелле, государствăна паха, таса тата клешчăр тырă памала.

Тырăсене тасатма тата типĕтме çанталăк лайăх тăрат. Колхозсем тырăсене лайăх типĕтнипе, сортировкă витĕр кăларнипе клешчсене пĕтерме пултараççĕ. Çак ĕçе организацилени çеç кирлĕ.

Палăртса хăварас пулат, Заготзерно пункчĕсем тырă илме çителексĕр хатĕрленмеççĕ, складсене пушатас тата складсемпе площадкăсене йусас график пурнăçланса пымаст. Уйрăмах çак ĕçсем Вăрмарта, Канашра, Шупашкарта начар пыраççĕ. Ийулĕн 10-мĕшне республикĕпе мĕн пур складсенчен 40 проценчĕ кăна тырă йышăнма хатĕр. Заготзернон Канашри, Улатăрти, Вăрмарти тата Шупашкарти пункчĕсенче складсене пĕтĕмпех йусаса çитермен, тарасасене клеймо лартса пĕтермен. Заготзерно пункчĕсен управлъайушчисем, çавнашкалах Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районсенчи уполномоченнăйĕсем пунктсенче ĕçлеме тĕрĕслеменĕ кадрсем тупса ĕçе илес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Тырă паракансем хушшинче кулътурăлă-массăлă ĕçсене иртерме мĕн кирлисене пурне те туса çитерес пулат (чайнăй-столовăйсем организацилесси, суту-илӳ йĕркелесси, хĕрлĕ кĕтессем тăвасси). Тырă панă чухне складсемпе тĕрĕс усă курни кирлĕ. Суртлă тырăсене усрама чи лайăх складсене хатĕрлемеле.

Колхозсенчен тырă массăлăн илме тытăниччен пунктсенчи работниксене тĕрĕс вырнаçтарса тухмала, тырă илнĕ çĕрте нимĕнле чăрмав та пулмала мар. Складсене халех хатĕрлесе çитерес пулат.

ССР Сойузĕн Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн ЧАССР уполномоченнăйĕ Д. МИТКОВ.

И. БОРИСĂВ

Испани халăхĕн геройла кĕрешĕвĕ пуçланнăранпа икĕ çул çитрĕ

Испании ирĕке йуратакан паттăр халăхĕ икĕ çул ĕнтĕ Англипе Францири реакцилĕ буржуази туррĕмех пулăшса тăракан икĕ фашисла державăна—Германипе Италине хирĕç, вĕсем тапăннине хирĕç парăнмасăр кĕрешет.

Германипе Итали Испанири хăйсем лартнă çынсен пăлхавне тĕплĕн хатĕрленĕ. Республика правительстви хăй вăхăтĕнче документсем пичетлесе кăларчĕ, вăл документсем Германипе Итали фашисĕсем Испанире сăтăрлă, аркатулă ĕçсене анлăн туса пынине пĕр иккĕлевмеле мар кăтартса параççĕ. Фашисла пăлхав [illegible]нхи кунсенче Пиреней çу[illegible]вĕ çинче Гестапо (Германи[illegible]и) тата Овра (Италири [illegible] лици) агенчĕсемпе за[illegible] сем туллийех пулнă [illegible] фашиссен руководит[illegible] липа Римра час-часа[illegible] çынсем пулнă. Унта[illegible] тенкĕ, хĕçпăшал, инс[illegible] се тăнă.

Фашисла правител[illegible] нире пăлхав çĕклеме[illegible] пĕлмесĕр хатĕрленнĕ [illegible] рăк Испани республик[illegible] чиксене хирĕç татăкла[illegible] Коммунисла парти пĕр[illegible] тарса, асăрхаттарса тă[illegible] та, вăл тапхăрти респуб[illegible] вителстви пăлхава атал[illegible] лана вăхăтрах пĕтерсе ла[illegible] ламан. Фашисла генерал[illegible] ченчи пекех çар коман[illegible] че ларнă; вĕсем çĕрш[illegible] пек хĕçпăшаллă вăйсен [illegible] çар техникин хуçисем [illegible] Сăмахран, Франко гене[illegible] Мароккинчи 40 пинлĕ [illegible] тăнă.

Испанири фашисла [illegible] çĕршывĕнчи ĕççынн[illegible] чĕрелĕ демократсене [illegible] тет: фашисла разведк[illegible] рине хирĕç пĕр шелле[illegible] лăн кĕрешни çеç мирлĕ пурнăçа тĕреклĕн тытса тăма май парат. Фашиссен ишĕлтерӳлĕ ĕçĕсене кашт кăна сарăлса кайма май панин те пысăк хăрушлăх кӳрет, халăх массисемшĕн хăрушă резултатсем кăларса тăратма пултарат.

Испанири вăрçă ĕçĕсем сарăлса пынă май, вăл кĕрешӳре Германипе Итали Испани халăхне хирĕç çапăçни уççăнрах та уççăнрах курăнса пычĕ. Испанийе Германипе Итали самолъочĕсем, танкĕсем, туписем йухăмĕ, вĕсемпе пĕрле опытлă лъотчиксем, танкиссем, артиллериссем куçса пычĕç. Вĕсем хыççăн Германипе Итали офицерĕсем, инструктăрĕсем, çар „советникĕсем" пычĕç.

Анчах часах фашисла интервентсем пăлхавçăсен аллинче мĕн чухлĕ те пулин шанчăклă чĕрĕ вăй [illegible]ук иккене курса илчĕç. Испани [illegible]лăхĕ пĕр çын пек пулса, респуб[illegible]кă правителстви йенне тăчĕ, [illegible] хавçăсен кадрĕсем—Мароккăри [illegible] ӳтлĕ çынсен çарĕсем, урăх [illegible]ăв легионĕнчи пуçкасансем [illegible] пушанса, пĕтсе çитрĕç. Вара [illegible]пе Муссолини Испанийе [illegible]чпе Итали çарĕсен пысăк [illegible]енийĕсене йачĕç. Гвадала[illegible]ĕнче ĕнтĕ Мадрид çине [illegible]35 пинлĕ çарĕ наступлени[illegible]а. Пурте пĕлеççĕ, вăл ça[illegible]ĕçĕ анмарĕ, ăна Испани[illegible]ĕн çарĕсем тĕппипех çап[illegible]трĕç.

[illegible]ани çине Германипе Италин [illegible]ăсем пăрахакан самолъочĕсем [illegible]шерĕн вĕççе пычĕç. Германипе [illegible]алин тинĕс-çар флочĕ Испани [illegible]ирăнĕсене блокадăпа çавăрса илме пуçларĕ. Италин шыв айĕнче çӳрекен кимисем Испани карапĕсене тинĕс тĕппе путарма пуçларĕç. Германи карапĕсем Алъмери, Малагă çине, йулашки вăхăтра—Кастелйон де ла Плана çине тупăсенчен печĕç.

Республикăлă Испанире

Фронта кайакан добровольцсем Барçелонă хулин урамĕсем тăрăх пыраççĕ.

(Сойузфото).

Гитлĕрпе Муссолини аллисем çинче Испани халăхĕн йунĕ хĕрелсе тăрат. Республикăлă Испани вăхăтсăр пĕтнĕ 10 пин пĕчĕк ачашăн йĕрет, вĕсене фашисла пиратсем мирлĕ халăх пурăнакан пунктсем çине сывлăшран бомбăсем параха чух вĕлерчĕ. 100 пин ытла ача амаса пĕтнĕ; вĕсенчен нумайĕшĕ ĕмĕрлĕхех сурана лиса йулнă.

Çынвĕлерен тискер кайăксен намăслă келеммине Германипе Итали фашисĕсем нихçан та çуса йараймĕç!

Фашиссен Испанири интервенцийе çапла тискерĕн асса кайасси Англипе Франци буржуазийĕ ирĕк панипе кăна пулма пултарчĕ. Германипе Италин Пиреней çурмаутравĕ çинчи позицийĕсем çирĕпленниччен хăрамали сăлтавсем Англипе Франции çителĕклĕ. Анчах Испанири халах фрончĕ тĕрекленниччен Англипе Франци буржуазийĕ тата ытларах хăрат. Испани халăхĕ çĕнтерни ытти çĕршывсенче, уйрăмăн илсен, Франципе Англире халăх фрончĕшĕн пыракан йухăма малăла хăватлăн тĕксе йама пултарат. Ака мĕншĕн ĕнтĕ Англипе Францири реакционерсем Англипе Франци интересĕсене сийен кӳресех фашисла интервентсене пулăшаççĕ.

Англипе Францире правителствăра ларакансен ушкăнĕсем çапла хăтланнине пула ĕнтĕ Испани ĕçĕсене хутшăнас марри çинчен тунă килĕшӳрен интервентсем республикă территорине блокадăпа çавăрса илмели оруди туса хума пултарчĕç.

Анчах Германипе Итали интервенцийĕ анлăн сарăлса кайни те, интервентсене Англипе Франци пулăшни те паттăр Испани халăхĕн тăшмана хирĕç кĕрешес вăйне хуçма пултараймаççĕ.

Испанире фашисăма хирĕç кĕрешекенсем кĕрешĕве хĕçпăшалсăр пуçларĕç: вĕсен çар пулман, вăрçă материалĕсем пулман, вăрçас опыт та пулман. Астурири горнякĕсем тăшмана хирĕç динамитлă шашкăсемпе, унчен сăрт-ту породисене сирпĕтнĕ çĕрте усă курнă шашкăсемпе тухнă. Мадрида сыхлакансем Итали танкĕсене хирĕç алăпа ывăтмали гранатăсемпе, динамит тултарнă консервă банкисемпе çапăçнă. Халăх милицийĕ халиччен пăшал персе курман отрйачĕсем Италипе Германин вăрçă техникине хирĕç мĕнле çапăçмалине пĕлмен, вĕсем позицилĕ çапăçусене мĕнле илсе пымалине пĕлмен. Халăх милицийĕ чаçĕсенче çирĕп çар дисциплини пулман. Вăл чаçсем пĕрлĕхлĕ командине пĕлмен.

Фашиссен наступленийĕн пирвайхи тапхăрĕнче халăх милицийĕ чаçĕсем самолъотсемпе, танксемпе, артиллерипе пĕрле наступлени туса пыракан регулъарлă çарсене хирĕç тăма пултарайман. Республиканецсем фашиссен наступленине Мадрид патĕнче кăна чарса лартма пултарчĕç. Мансанарес йуханшывĕ çинчи кĕперсемшĕн, Университет городокĕнчи позицисемшĕн пынă кĕрешӳре республиканецсем фашиссем хĕссе пынине чарса лартма май пуррине курса илчĕç. „Вĕсем иртсе кĕреймĕç!" текен чĕнĕвлĕ сасă пĕтĕм Испани тăрăх кĕрлесе кайрĕ.

Гвадалахарă патĕнчи тата Харама йуханшывĕ çинчи çапăçусенче республикăн регулъарлă çарĕсем—çирĕп дисциплинăпа çыхăнса тăракан, кĕрешӳре писĕхнĕ командирсемпе комиссарсем йертсе пыракан çар йĕркеленсе çирĕпленсе пычĕ. Республикăн çамрăк çарĕн йатарласа тунă чаçсем çуралса тухрĕç. Республикăн паттăр лъотчикĕсемпе танкисĕсем Испанири халăх массисен йуратнă геройĕсем пулса тăчĕç. Республиканецсем тăшман атакисене çĕмĕрме кăна мар вĕренчĕç, вĕсем кайала хыттăн таврăса çапма та вĕренсе çитрĕç. Вара Испани халăхĕн „Епĕр çĕмĕрсе тухăпăр!" текен манаçлă та мухтавлă лозунгĕ йанраса кайрĕ.

Ĕççыннисем пĕр çын пек пулса тăрăшнипе республикăлă Испанире вăрçă хатĕрĕсем тăвакан пысăк промышлĕннăç ӳссе çитĕнчĕ. Республикă çарĕ тăшманшăн хăрушă вăй пулса тăчĕ. Республикă çарĕ талантлă, хăйсене хăйсем шеллесе тăман командирĕсемпе комиссарĕсен йачĕсем—Миаха, Рохо, Ернандес, Михо, Листер, Кампесино т. ыт. нумай çынсен йачĕсем пĕтĕм тĕнчене сарăлчĕç. Республикăшăн пыракан çапăçусенче республикăн пиншер боецĕсем мухтавлă та чаплă кĕрешсе илчĕç, вĕсене хăйсен халăхĕ ĕмĕрне те йуратма пăрахас çук. Вĕсем пурте—Испанири чăн-чăн халăх геройĕсем.

Фашиссен командăванийĕ кăçалхи çуркунне пуçланă пысăк наступлени тĕрекленнĕ республика çарĕн çапăçма пултарас хăватне хуçма пултараймарĕ. Фашиссем вăл наступлени çине пысăк шанчăк хунă пулнă: Гитлĕрпе Муссолини, „халъ ĕнтĕ Испани республикине пĕтерсе лартатпăр" тесе, Чемберлена чаплăн сăмах панă. Фашиссем республикă территорине икĕ пайа касса уйăрчĕç, анчах республика çарĕсем çĕнĕ чикĕсенче тата ытларах çине тăрса кĕрешеççĕ.

Икĕ çул хушшинче республикăн çамрăк çарĕ Берлинпа Римри генераллă штабсен пĕтĕм планĕсемпе ĕмĕчĕсене пуçхĕрлĕ ӳпĕнтерсе йачĕ.

Испани халăхĕ хăйĕн калама çук хăватлă кĕрешĕвĕ валъли мĕнле çăлкуçĕнчен чĕрĕ вăй илсе тăнă-ха? Çав пурнăç паракан çăлкуçĕ вăл—халăх фрончĕ!

Пĕтĕм Испани халăхĕ Германипе Итали интервенчĕсене тата вĕсен агентурине хирĕç кĕрешес, вĕсене çĕнтерес пĕр кăмăлпа хавхаланса, çĕкленсе тăрат. Испани правителствинче — чăн-чăн халăх фрончĕн правителствинче Испанири фашисăма хирĕçле мĕн пур партисемпе организацисен представителĕсем те пур.

Коммунистсем — халăх фронтне пуçарса йаракансем—халъхи вăхăтра республикăлă Испанире чи вăйлă та чи авторитетлă парти пулса тăраççĕ. Вĕсен сассине пĕтĕм Испани халăхĕ тимлĕн итлесе тăрат. Испанири коммунисла парти ретĕнче 300 пин член ытла шутланат. Каталонири пĕрлешӳлĕ социалисла партире (унта коммунистсемпе пĕрлех социалистсем те кĕреççĕ) 60 пин çын шутланат. Социалисла çамрăксен пĕрлешӳлĕ сойузĕнче 500 пин члена йахăн шутланат.

Халăх фрончĕ республикăлă Испани йалавĕ пулса тăчĕ. Халăх фрончĕн тăшманĕсене—ирсĕр троцкисла шпионсене, диверсантсене, çынвĕлеренсене Испанири алă массăсем умĕнче пĕтĕмĕшпех тăрă шыв çине кăларнă. Гестапопа Овран ПОУМ текен троцкисла бандинчи агенчĕсене мĕн пур тӳрĕ чĕрелĕ испанецсем хайарран кураймаççĕ.

Испани халăхĕн паттăр кĕрешĕвĕ малта пыракан пĕтĕм етемлĕхе хавхалантарса çавăнтарат. Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен çулпуçĕ Сталин йулташ: „Испанийе фашисла реакционерсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларасси испанецсен уйрăм ĕçĕ мар, вăл—пĕтĕм малта пыракан тата прогрессивлă етемлĕхĕн пĕрлехи ĕçĕ" терĕ. Çулпуçĕн çак сăмахĕсем пĕтĕм тĕнчери мĕлйуншар ĕççыннисен ăстăнне тарăна кĕрсе вырнаçрĕç.

Республикăлă Испани хĕçпăшал тытса паттăррăн кĕрешме пуçланăранпа икĕ çул тулнă кун пĕтĕм тĕнчери мĕлйуншар ĕççыннисем, фашисла ирсĕрсене, ĕçпе пурăнакан етемлĕхĕн çак чи усал тăшманне часрах çĕнтерме сунса, аслă Испани халăхĕ патне çулăмлă салам сем йараççĕ.

Парти пурнăçĕ

Сочувствуйушчисем çинчен маннă

(Сочувствуйушчи çырăвĕ)

ССРС Верховнăй Совет суйлавне хатĕрленнĕ чухне (1937 çулта) ПСК(б)П Шăмăршă райкомĕ мана Улатăра, агитатăрсен 15 кунлăх курсне йачĕ. Вăл курса петерсе килсен епĕ тăрăшса, агитаци ĕçне йуратса ĕçлерĕм. Халăх хушшинче политикăлă агитацине лайăх организацилесе пыма тăрăшрăм, çав вăхăтрах епĕ доверённăй та пулса ĕçлерĕм.

Çак ĕçсене курса мана сочувствуйушчисен ретне илчĕç. Сочувствуйушчисен ретне илнĕшĕн епĕ питĕ хĕпĕртерĕм. Политикăлă пĕлӳве ӳстеретĕп, парти кандидатне кĕме пĕтĕм чĕререн тăрăшса тимлĕн хатĕрленетĕп, тесе хаваслан-наччĕ. Анчах ман шухăш ку тарана çитсе те пурнăçа кĕмерĕ-ха.

Мана сочувствуйушчисен ретне илнĕренпе 5 уйăх ытла ĕнтĕ. Унтанпа сочувствуйушчисене пуçтарса пĕр канашлу та туса ирттермен, политкружокра та вĕрентмеççĕ-ха. Вăхăт çаплах иртсе пырать, анчах епĕ вĕренейместĕп. Чăнах та, епĕ халĕ парти кандидатне кĕме хатĕрленес тесе хам тĕллĕн вĕренме тăрăшатăп. Анчах хам тĕллĕн, пĕр пулăшусăр вĕренме питĕ йавар. Мана политкружокра вĕрентсен тем пекех лайăх пулнă пулĕччĕ. Епĕ ПСК(б)П историне вĕренмен. Мана халь вĕрентсен мĕн тĕрлĕ тăрăшса пысăк хаваслăхпа вĕреннĕ пулăттăмччĕ!

Епĕ ку тарана çитсе те кам парторг пулса ĕçленине пĕлместĕп-ха. Вăл сочувствуйушчисене коммунистсен уçă пухăвне те, канашлăва та чĕнмен, ун çинчен шухăшламасть те пулмала.

ПСК(б)П райкомĕ тата парторг хăçан сочувствуйушчисем çине кирлĕ пек çаварăнса пăхăç-ши? Инçе-ши, çывăх-ши вăл вăхăт?

С. П. Чамейĕв.

Парти кабинечĕн ĕçĕсем

Парти кабинечĕ умĕнче тăракан задачă вăл—пропагандиссене, агитатăрсене, уйрăм коммуниссене вĕревӳ ĕçĕнче пулăшса тăрасси пулать. Çакăн çинчен районри отчотпа суйлав пухăвĕнче те хыттăн кăтартса хăварчĕç. Епĕр мĕнле пурнăçлатпăр-ха çак задачăсене?

Кувакинă районĕнче 1938 çулхи ийулĕн 1-мĕшне политграмăтăна вĕренекен кружоксем 3, парти историне вĕренекен кружоксем 4 шутланаççĕ. Ку кружоксенче коммуниссем, комсомолĕцсем, сочувствуйушчисем пурĕ 112 çын вĕренеççĕ. Парти кабинечĕ пропагандиссене, вĕренекенсене те куллен пулăшса пыма тăрăшать.

Ултă уйăх хушшинче парти историне, политграмăтăна вĕрентекен пропагандиссене 5 хут пуххса çеминар туса ирттернĕ. Агитколлектив руководителĕсемпе 7 çеминар ирттернĕ. Кунсăр пуçне комсомол пропагандисĕсемпе 3 çеминар, учитĕл пропагандисĕсемпе 3 çеминар тата вулав çурчĕн пуçлăхĕсемпе 2 çеминар ирттернĕ.

Парти кабинечĕ кружоксенче вĕренекенсене те чылай пулăшу панă. Нумай вĕренекенсене Маркс—Енгĕлс—Ленин—Сталин произведенийĕсене, илеилĕ литературă кĕнекисене парса пулăшнă. Печчен коммуниссем валли уйрăм консультаци организацилеве. Сăмахран, Атнашкин йулташ пĕр патшалăхра социалисăм тăвас ыйтăва тĕплĕн ăнланман, Чекалин йулташ РСФСР Верховнăй Совечĕ миçе палатăран тăнине пĕлмен т. ыт. те. Вĕсене ку ыйтусем çине кирлĕ пек ăнлантарса панă.

Парти кабинечĕ парти историне вĕренекен кружоксене вырăнсене кайса тĕрĕсленĕ. Заньатисене туххса çӳресе çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме пулăшнă.

Тăватă кружок (3-шĕ парти историне вĕренеççĕ, тепри—политграмăтă кружокĕ) заньатисене парти кабинетĕнчех ирттереççĕ. Ку кружоксенче 77 çын вĕренет. Вĕренекенсене литературăпа, консультаципе вырăнтах пулăшу паратпăр.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлас умĕн парти кабинечĕ çумĕнче 60 агитатăра 10 кунлăх курсран вĕрентсе кăлартăмăр. Ку агитатăрсем суйлав вăхăтĕнче питĕ активлă ĕçлерĕç. Вĕсем суйлав Положенине анчах мар, коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн те агитацилерĕç.

Агитатăрсемпе пропагандиссене ĕçре пулăшса тăма парти кабинетĕнче литературă выставкисем организацилетпĕр. Ун пек выставкăсене Хĕрлĕ Çар 20 çул тултарнă вăхăтра, мартăн 8-мĕшĕ тĕлне, майăн 1-мĕшне, суйлав вăхăтĕнче т. ыт. вăхăтсенче те организациленĕ. Парти кабинетĕнне парти истори çинчен кăларнă альбомсем пур. Ку альбомсемпе пропагандиссем заньатисенче сарлакан усă кураççĕ.

Хальхи вăхăтра уйа тырă вырма тухнă май агитаци ĕçне уйра туса пыраççĕ. Пирĕн задача вăл—агитатăрсене вырăнта пулăшу парасси пулать.

Парткабинет заведуйушчийĕ Скворцов.

Совет саманинчи чи лайăх поет

(В. В. Майаковский çурални 45 çул тултарнă тĕле)

Людмила Майаковскайа—Владимир Майаков кин аппăшĕ—хăйĕн асаилĕвĕсенче поет çамрăк чухнехи çинчен çапла çырать: „Вăл вĕçĕмсĕр тимлĕ те хайула аччĕ, хăй мĕн тăвас килнĕ çавна тутарасшăн тăрăшатчĕ, çав вăхăтрах вăл питĕ те чĕрĕ, савăнăçлă, çивчĕ ăслă, çăмăл шăмшаклă ача пулнă: вăл выльаса-кулма, кĕнекесем вулама, картинăсем тума йаланах вăхăт тупнă".

Владимир Майаковскин ачалăхĕ (1900 мĕш çулччен) Кутаис хули çывахĕнчи Богдаты йалĕнче иртнĕ. Унăн ашшĕ ĕçлесе пурăннă лесничествă—хальхи Рион гидроелектростанцинчен 10—12 километрта çеç. Çемйере тытăнса тăнă тăванла атмосферă, çав тери капăр тавралăхăн сăнĕ пулас поетăн ăстăнне çамрăклах тарăнăн кĕрсе ларнă, вĕсем унăн малашнехи пĕтĕм пурнăçĕпе творчĕствинче те паллă вырăн йышăнса тăнă. Богдаты йалĕ, Грузи—Майаковскишĕн йаланлăхах йуратнă çĕршывăн чи йуратнă кĕтесĕсем пулса йулнă.

Кутаисри гимназинче пилĕк çул хушши вĕренет вăл. Çамрăклах кĕнекесем вулама йуратнăскер халĕ ĕнтĕ вулас ĕçе пĕтĕмĕшпех парăнать. Гоголь произведенийĕсене вулать В. Майаковский, Лесков произведенийĕсене вулать, Гончаровăнне, Тургенĕвăнне, Горький çырнисене йуратса вулать, поетсенчĕн унăн чи йуратнисем—Пушкин, Лермăнтăв тата Некрасăв.

1905 çул. „Вĕренес вăхăт мар-ха кунта"—çапла çырнă Майаковскин кайарах хăйĕн автобиографийĕнче. Кутаис хулинче револьуци ĕçĕпе вăрттăн ĕçлекен нумай кружоксем сиксе тухаççĕ. Çав кунсенче Майаковский хăйĕн аппăшĕ патне акă мĕн çырать: „Пирĕн кунта пилĕк кун хушши пăлхав пычĕ, çав вăхăтра епĕр чиркӳре „Марсельеза" йурра йурланăшăн гимназийе хупса тăватă кунлăха вĕрентмесĕр усраççĕ". Ĕçе йуратакан тата револьуцилĕ шухăшлă интеллигенци мыйлă Майаковскин çемйи çамрăк Владимира вăй хăват кĕртсе аталантарнă, ăна малала туртăнакансен ретне тăма пулăшнă.

1906 çулăн пуçламĕшĕнче Владимир Майаковский ашшĕсĕр çурма-тăлăха тăрса йулать. Çакăн хыççăн вара вăл амăшĕпе пĕрле Мускава пурăнма куçать, кунта унăн пурнăçĕн иккĕмĕш тапхăрĕ пуçланать, никам пулăшакансăр выçлăн-тутлăн пурăнать.

1908 çулта Майаковский большевик пулса револьуцилĕ йухăма хутшăнать. Вăрттăн ĕçсем туса пынăшăн ăна 1910 çулта арĕслеççĕ, пĕр çулталăка йахăн тĕрмере хупса усраççĕ. 18 çулхи Майаковский тĕрмерен тухнă хыççăн, „социалисăмла искусствă тăвас" ĕçе вĕренме шут тытать. Картинăсем ӳкерме, скульптурăсем тума вĕрентекен училишчăна вĕренме кĕрет вăл, буржуалă искусствă камсемшĕн иккенне часах туйса илет, —ăна хирĕç тăрать. Чи малтанхи сăвви ун 1913 çулта „Пощечина общественному вкусу" йатлă сборникре пичетленсе тухать. Империалисăм вăрçине поет çав тери сивĕн кĕтсе илет, çав çулсенче вăл: „Облака в штанах", „Флейта—позвоночник", „Война и мир" йатлă сăвăсем çырать. Револьуцине асăнса çырнă сăввисемпе Майаковский литературăна çĕнĕ тĕнче илсе кĕрет, çĕнĕ тĕнчен паттăрла çĕнтерĕвне ырласа, пулас хаваслăха ĕмĕтленсе мухтавлă йурăсем кĕвĕлет. Револьуци пуласшне, револьуци çес çĕнĕ тĕнчене уçса парассине 1915 çултах туйса илет Майаковский. Çав çулхинех вăл:

> Где глаз людей обрывается куцый,
> главой голодных орд,
> в терновом венце революций
> грядет шестнадцатый год,—тесе

çырать.

Унăн сăввисем, йуррисем револьуцилĕ шухăшпа тапса тăракан массă хушшине çиçĕмле саланаççĕ. Матроссем унăн частушкисене такмакласа Зимний Двореца штурмлама кайаççĕ:

> Ешь ананасы,
> рябчиков жуй,
> день твой последний
> приходит буржуй!

Октаберти социалисăмлă аслă револьуцине Владимир Майаковский чунтан-чĕререн хавхаланса йышăнать, револьуци ĕçĕшĕн вăл мĕнпур талантне, пурнăçне пама хатĕр тăрать.

Граждăн вăрçи вăхăтĕнче Майаковский РОСТ-ра плакатсем тунă çĕрте ĕçлет, плакатсенчи куплетсемпе вăл тăшмана хирĕç хайаррăн кĕрешме, тăшмана çĕнтерме пĕтĕм халăха чĕнет. Поетăн малалли ĕçĕсенче те хăй çĕршывне вăл çав тери йуратни уçăмлăн курăнать. Çав йурату унăн çĕршыв тăшманĕсене, халăхăн ылханлă тăшманĕсене, изменниксене пĕтĕм чунтан-чĕререн курайманлăхпа сыхланать. Совет саманинчи чи лайăх та чи талантлă поет Владимир Майаковский пĕтĕм тĕнчери револьуцилĕ поезин никĕсне хывакане, ăна пуçарса йаракане пулса тăрать.

Октябĕр револьуци хыççăнхи çулсенче Майаковский питĕ те вăйлăн ĕçлет: нумай сăвăсем, поемăсем çырать. Вăл çырнă кашни çĕнĕ произведени социалисăмлă культурăн чи хаклă ахахĕ пулса тăрать. Майаковский—совет халăхĕн социалисăмлă идейисене чĕререн парăннă поет, унăн сăввисем халăхăн шухăшĕ-кăмăлĕпе çыраннă, совет гражданинĕ пулнăшăн пĕтĕм тĕнче умĕнче çĕкленсе мухтаннă вăл, çĕршыва тата çулпуççене чĕререн йуратнă. („Владимир Ильич Ленин", „Стихи о советском паспорте", „Хорошо", „Во весь голос" поемăсем).

Ыран, ийулĕн 19-мĕшĕнче, Владимир Майаковский çурални 45 çул тултарать. Вăл чĕрĕ пулнă пулсан çак кунта совет халăхĕ тата пысăкрах хаваслăхпа, пысăк йуратупа паллă туса ирттернĕ пулĕччĕ. Анчах чĕрĕ мар вăл: Владимир Майаковскин, совет саманинчи чи лайăх поетăн, кусĕсем сакăр çул кайала ĕмĕрлĕхе хупăннă.

Коммунисăм идейисене, Ленин—Сталин партине пĕр вĕçĕмсĕр парăннă кĕрешӳçĕ—поета литературари троцкисла-бухаринла агентсем çав тери курайман. Вĕсем ăна сахал мар мăшкăланă, ун çинчен тĕрлĕ елек сарнă, пирĕн вăхăтри чи талантлă поетăн пур лайăх произведенийĕсем çине те таса мар шыв сапма хăтланнă. Майаковский чăн-чăн таса чĕрелĕ большевик иккенне, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, социалисăм ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйне панине туйса илсе, троцкисла-авербахла çынцĕлеренсем, шпионсем Майаковский поезине пĕтерсе лартасшăн пулнă. Анчах аслă поет вĕсене парăнман. Унăн сăввисен хайар хĕçпăшалĕ халĕ те тăшмансене пĕр хĕрхенӳсĕр çĕмĕрсе пырать, унăн ĕçĕнчи большевикла идейлăх коммунисăмăн аслă ĕçне нумай пулăшнă, пулăшать те. Аслă револьуцин аслă поечĕ пирĕн халăхра ĕмер-ĕмĕр пурăнать.

(И. МАРГОЛИН статйин тăрăх).

Çамрăксен ĕçĕ

Маťшу йалĕнчи (Шахасан р.) çамраксем хушшинче çĕнĕ займа 155 тенкĕлĕх сарчĕç. Ку тĕлĕшпе комсомолĕцсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Бригадăсенче, звеносенче займ усси çинчен ăнлантараççĕ.

Н. Йакăвлĕв.

Займа хавасланса çыранаççĕ

Йамбахтинăри „Партизан" колхозри (Вăрнар р.) колхозниксемпе йединоличниксем Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх займне 2045 тенкĕлĕх çыранчĕç. Займ сарас тĕлĕшпе уй хир ĕç бригадирĕ Кумруков Васили, Абазакăв П., Николайĕв И., Попов С. комсомолĕцсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса кашнийех 500 тенкĕрен кайа мар сарчĕç.

Г. Левин.

Çĕнĕ кадрсем ӳсеççĕ

КУСЛАВККА. Йулашки çулсем хушшинче комбинатри рабочисенчен темиçе вуншар çынна йертсе пырас ĕçе куçарнă. Вĕсем хушшинче ĕлĕкрех станочникре, прийомщикре йе квалификацисĕр ĕçленисем те сахал мар. Акă, комбината килсе кĕрсенех станок çинче, кайарахпа çменă маçтăрĕ пулса ĕçленĕ Йевдокийа Цыганова йулташ хăйĕн квалификацине йаланах хăпартса пынă. Çынсене те сахал мар вĕрентнĕ. Ĕçри хастарлăхне, пултарулăхне пысăккăн кăтартнипе ĕнтĕ Цыганова йулташ ССРС Верховнăй Совет депутачĕ пулма тивĕçлĕ пулчĕ. Вăл халĕ те хăйĕн, çавăн пекех тата пĕтĕм рабочисен пĕлӳне, квалификацине хăпартас тĕлĕшпе ырми-канми ĕçлет. Ку ĕçре чăн малтан хăй пример кăтартать. Хальхи вăхăтра Цыганова йулташ хăма çуракан цех начальникĕ пулса ĕçлет.

Пĕр-ик çул кайала çменă маçтарĕ пулса ĕçленĕ, халĕ цех начальникĕ пулса ĕçлекенсем комбинатра сахал мар. Федăр Павлăв малтанах комбинатри хапрăк-сават шкулĕнче вĕреннĕ. Унтан вĕренсе тухсан станочникре, кайарахпа çменă маçтăрĕнче ĕçленĕ. Хальхи вăхăтра вăл йавăç каскалакан цех начальникĕ. Калас пулать, ку ĕçре те Павлăв йулташ хăйĕн хастарлăхне чакармасть.

Морскова йулташ станок çинче ĕçленĕ, халĕ çменă маçтăрĕ. Çавăн пекех чылай вăхăт хушши слесăрта ĕçленĕ Макарчĕв халĕ механически цех начальникĕ, електромонтор пулнă Куликов—електроцех начальникĕ, бригадир Лаоç халĕ пăспа вăй станцин начальникĕ пулса ĕçлет.

Йертсе пырас ĕçе куçнисенчен никăмĕ те вĕренмесĕр тăмаççĕ, йалан вĕренсе, ӳссе пыраççĕ. Шкулсенче, курссенче йе килте вĕренеççĕ. Комбинатра рабочи пулса ĕçлевисенчен аслă шкулсенче вĕренекенсем те пур. Теслĕхрен, Смирнов йулташах илер. Вăл 1931 çулта хапрăк-сават шкулĕнче вĕренсе тухсан станочник, унтан профсойуз ĕçĕнче, унтан çменă маçтăрĕнче ĕçленĕ. Çак ĕçсенче йаланах лайăх тата кăтартулă ĕçлесе пынăран ăна йавăç типĕтекен цех начальникĕ туса хураççĕ. 1937 çулта Смирнов йулташа тата пысăк та ответлă ĕçе—комбинат директăрĕн заместителне лартаççĕ. Кăçал вăл Мускаври Сталин йачĕпе тăракан промышлĕннăç Академине вĕренме кĕрет. Çакăн пекех цех начальникĕ пулса ĕçленĕ Костушкин, пропагандистра ĕçленĕ Волкăв йулташсем те хальхи вăхăтра промышлĕннăç Академинче вĕренеççĕ.

А. Мошков.

Ĕç тухăçлăхĕ ӳссех пырать

(Шупашкарти тир-сăрăя савăчĕ)

Ĕç вырăнĕсене тĕрĕс организацилени, ĕç дисциплинине çирĕплетни тата техникăна вĕренессине лайăх организацилени,—çаксем пурте промфинплана тултарма, çавăн пекех ĕç тухăçлăхне ӳстерме кирлĕ условисем туни пулать. Стаханăвла йухăм анлăн саралса пырасси те çав условисене тунинчен килет.

Производствăна тĕрĕс организацилени савăта лайăхрах ĕçлекен тума пачĕ. Йанварте ĕç тухăçлăхне ӳстерес плана тултарайман пулсан, ийунь уйăхĕнче 124,5 процент тултарнă.

Малтанхи уйăхрипе танлаштарсан стаханăвĕцсен шучĕ те ӳссех пырать. Нормăна тултарса пыракансем халĕ стаханăвĕцсен ретне тăчĕç. Акă раскройнăй цехри малтанхи вăхăтсенче нормă тултарса ĕçленĕ Анйă Шоронăвă, ийунь уйăх планне 222,4 процент, А. Орлова 223,9 процент, сăран тăвакан цехри Ждачко 243,2 процент тултарнă.

Цехсемпе бригадăсенче нормăна тултараймăн рабочисен хисепĕ чакса пырать. Атă-пушмак цехĕнчи мартăн 8-мĕш кунĕ йачĕпе тăракан бригадăнах илер. Ку бригадăра пĕтĕмпе 22 çын. Бригадăна стаханăвкă Скачкова йулташ йертсе пырать. Вăл чăн малтанах ĕçре хăй лайăх пример кăтартса ĕçлет, кашни кунах нормăна 150—220 процентшар тултарать. Брак унăн пачах пулмасть. Ĕç вырăнне пăхсан та пур йенчен те йĕркелĕ. Çаксене Скачкова йулташ пĕтĕмпех хăй тăрăшнипе, ĕçе йуратса, хастарлăн ĕçленипе туса пырать. Хăйĕн пака опытне ытти рабочисем хушшинче сарать. Çапла ĕçленĕрен ĕнтĕ унăн бригадинче ĕçлекенсем ийунь уйăхĕнче 20 çын нормăна ытлашшипех тултарнă, икĕ çын çеç (Данилăвăпа Терентйĕвă йулташсем) нормăсене тултарайман. Çакăн пекех Ленин йачĕпе тăракан бригадă та (бригадирĕ Куçмин йулташ) ийунь уйăхĕнче ĕç тухăçлăхне 143,2 процент тултарнă. Ку бригадăра ĕçлекенсенчен нормăна тултарайманнисем пĕтĕмпе те икĕ çын çеç. Уйрăм стаханăвĕцсем (Михайлăв, Калентйĕва йулташсем) кулленхи нормăна йалан 160—200 процентшар тултарса пыраççĕ.

Хыр. Лисин.

Чăваш республикин Сталинла Конституцине йышăнни пĕр çулталăк çитрĕ

Иртнĕ 1937 çулхи ийулĕн 18-мĕшĕнче Чăваш республикинчи Советсен Чрезвычайлă XI-мĕш Съеçĕ Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикин Тĕп Саккунне (Конституцине) çирĕплетрĕ. Унтанпа ĕнтĕ пĕр çулталăк иртрĕ. Вăл Конституцире пирĕн Чăваш халăхĕ социалисăмшăн кĕрешсе илнĕ çитĕнӳсене ылтăн саспаллисемпе çырса хунă.

Чăваш АССР Конституцийĕ пĕтĕмпех ССР Союзĕн тата РСФСР Сталинла Конституцийĕсемпе килĕшӳлĕ, вĕсемпе тачăн çыхăнса тăрать, урăхла каласан, вăл вĕсен ачи пулса тăрать. Вăл—историлĕ политикăлă пысăк документ. Ăна чăваш ĕçхалăхĕ Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе, аслă Октабĕр револьуцийĕ чăваш ĕçхалăхне ирĕке кăларнипе, Ленин—Сталин партийĕн наци политикине пурнăçа кĕртсе пынипе, ССР Союзĕн тăванлă халăхĕн çемйинче пурăннипе тума пултарчĕ. Вăл пирĕн чăваш халăхĕ пĕтĕм совет çĕршывĕнчи ытти халăхсемпе пĕртан пулса тăнипе, хăйĕн культурине—форми тĕлĕшĕнчен нацилĕ, ăшчикĕпе социалисăмлă культурине хăпартса пынипе, çĕнĕле, социалисăмлă пурнăç тунипе пулчĕ.

Чăваш АССР Конституцийĕ ССР Союзĕн Сталинла Конституцийĕпе уйăралми тачă çыхăнса тăрать. Сталинла Конституци—социалисăмлă государствăн Конституцийĕ. Ун пек Конституци халиччен пулман, пулма та пултараймасть.

Капиталисăмлă государствăсенче пирĕнни пек чăн демократиллĕ Конституци тума пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен, унта ĕçхалăхĕн пурлăх çук, пурлăх уйрăм капиталиссен аллинче. Пирĕн пĕтĕм государствă пурлăхĕ—ĕçхалăхĕн пулса тăрать.

Капиталисăмлă государствăсенче пурлăх, пуйанлăх—халăха усă кăтартмали мар, халăхран капиталиссем валли тупăш кăлармали, халăха пĕр шеллемесĕр ĕçлеттермели пулса тăрать. Пирĕн пурлăх—пĕтĕм ĕçсыннишĕн, унăн пурнăçĕпе культурлăхне хăпартмали пулса тăрать.

Пирĕн çĕршывра çын вăйĕпе пурăнмали йĕркене пуçĕпех пĕтерсе, çынна çын експлоатацилессине тĕп тунă. Вĕсен государствă тытăмĕнче експлоататăрсем пуç пулса тăраççĕ. Пирĕн çĕршывра государствă тытăмĕ ĕçсыннисен аллинче.

Чăваш халăхĕ аслă Октабĕр револьуцийĕ пуличчен икĕ хутлă пусмăрлăхра асапланса пурăннăскер, халĕ ĕнтĕ Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăхсемпе пĕрле хăйĕн государствин Тĕп Саккунĕ çине: „Чăваш АСС Республикĕ рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государстви пулса тăрать", тесе çырса хучĕ.

Малалахи статйи унăн политикăлă никĕсĕ çинчен каласа, унта государствă ирĕкĕ кам аллинче тăнине çырса çирĕплетет. Ун çинчен çапла калать:

„Чăваш АСС Республикин политикăлла никĕсĕ—ĕçсынни депутачĕсен совечĕсем, помещиксемпе капиталиссен власне сирпĕтсе антарнипе, пролетари диктатури çĕнтерсе илнипе, чăваш халăхне патша йĕркин тата вырăс „империалисăмĕпе буржуазин нацилĕ пусмăрĕнчен хăтарнипе тата националисла контрреволюцийе çĕмĕрсе тăкнипе ӳссе çирĕпленнĕ советсем пулса тăраççĕ. Чăваш АСС Республикинче пĕтĕм влаç ĕççынни депутачĕсен совечĕсем урлă хулапа йал ĕççыннисем аллинче тăрать",—тенĕ.

Патша ирĕкне çĕмĕрсе тăкнă хыççăн нацилĕ буржуази „халь ирĕке тухрăмăр, ĕнтĕ пирĕн ирĕк", тесе нумай кăшкарашнă. Вĕсем халĕ ĕнтĕ ĕççыннисене експлоатацилеме хамăра ирĕк пулать, тесе шутланă. Çавăнпа наци буржуазийĕ кирек йăпле вак халăх хушшинче те февральти револьуципе усă курса, вакă халăхсен хушшинче буржуалă государствă тума тăрăшнă. Вĕсем, хăйсен тискер шухăшне ĕççыннисенчен пытарас шутпа, „нацилĕ пусмăра пĕтермеле", текен лозунгпа витĕнсе усă курма тăрăшнă.

Нумай çĕрте наци буржуазийĕ хăй йĕри-тавра вăй пухса буржуалă правителствăсем туса лартнă. Чăваш наци буржуазийĕ 1917 çулта феврать револьуци хыççăнах буржуалă националиссем, есерсемпе, кадетсемпе пĕрле, „Аслă Канаш" йатлă буржуалă правителствă туса лартнă. Унта буржуалă националиссем пулнă. Вĕсем пĕрмайах тĕрлĕ сăтавсемпе хăйсен йĕри-тавра вăй пухнă. Пуххусенче Керенскийĕн вăхăтлăх правителствине хута кĕрсе, ăна пит те ырласа решенисем йышăннă.

Сталин йулташ буржуалă-националисла халăх тăшманĕсем çинчен 1918 çултах çапла çырнă:

„Окраинăсенчи правителствăсен кĕрешĕвĕ буржуалă контрреволюци социалисăмла хирĕç кĕрешни пулнă та, çав çавах йулать".

Кайран та буржуалă-националиссем социалисăм строителствине хирĕç кĕрешсе пычĕç. Вĕсем пĕрмайах ĕççыннисене хирĕç кĕрешсе пырса, троцкиссемпе, бухаринĕцсемпе—фашисла бандитсемпе пĕрле пĕрлешсе сăтăр туса пычĕç. Вĕсене ĕнтĕ çĕмĕрсе тăкнă.

Сталинла Конституци тăрăх 1937 çулта декабĕрĕн 12-мĕшĕнче ССРС Верховнăй Совечĕн, 1938 çулта ийулĕн 26-мĕшĕнче—РСФСР тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем пулса иртрĕç. Чăваш халăхĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне сталинла суйлав саккунĕ тăрăх суйларĕ.

Çак суйлавсем совет çĕршывĕнчи халăх çирĕплĕхне, коммуниссен партине, аслă çулпуçне Сталин йулташа пĕтĕм халăх хĕрӳлĕ йуратса тăнине уççăн кăтартрĕç. Суйлавра Чăваш халăхĕ ЧАССР Верховнăй Советне пĕтĕм халăх депутатне — Сталин йулташа тата унăн чи çывăх соротникĕсене — Молотăв, Калинин, Каганович, Ворошилăв, Андрейĕв, Микоян, Йежов, Жданăв йулташсене суйларĕ.

Чăваш республикин Верховнăй Советне суйланă депутатсем—халăхăн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсем. Вĕсем хушшинче малта пыракан çынсем, производствăри стаханăвĕцсем, орденоносĕцсем, тырпул маçтăрĕсем, халăх ĕçĕшĕн тăрăшакан, тăшмансемпе хайаррăн кĕрешекен çынсем.

Сталинла Конституцире граждăнсен пурин те, арçынсенте, хĕрарăмсенте, ĕçлев прави, кану прави, вĕренӳ прави, пурăнма пулăшу илес прави пурри çинчен, вĕсене пурнăçа кĕртмеле çинчен çырса хунă. Конституци граждăнсене вĕсен рассине, национальнăçне пăхмасăр пĕртан правасем парать.

Социалисăмлă тăван çĕршыва сыхласси пур ĕççыннисен чи пĕрремĕш обязаннăçĕ тата чи таса тивĕçĕ пулса тăрать.

Социалисăмлă çĕршыва тапăнма хатĕрленекенсем вĕсем—ĕççыннисен чи тискер тăшманĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсем ĕççыннисен ирĕклĕхне пĕтерсе, капиталиссен пусмăрлăхне тепĕр хут ĕççыннисен ĕнси çине лартма тăрăшаççĕ. Пирĕн вĕсемпе пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешесси—пирвайхи задач пулса тăрать. Çавăнпа ĕнтĕ, халăх тăшманĕсене—троцкисла-бухаринла бандитсене, буржуалă националиссене, диверсантсене, шпионсене, сăтăрçăсене, çав пĕр çăмхана пуçтарăннă пĕтĕм ирсĕрсене, етемлĕх йăхĕн кайашĕсене тупса тытса пĕтерсе пымала. Политикă тĕлĕшĕнчен тимлĕ пулни, большевикла çивĕч сыхăлăхлă пулни, тăшмансемпе нихçан та килĕшменни, тăшмансемпе вĕçне çитиччен кĕрешсе пыни кирлĕ. Нацилĕ республика условисенче большевикла сыхăлăх пушех те ытларах кирлĕ. Сталин йулташăн çак кăтартуне пĕр самантлăха та манма йурамасть: „çынсен ăстăнĕнчи капиталисăм йулашкисем нацилĕ ыйту йенĕпе ытти кирек хăш йенĕпе пулнинчен нумай ытларах чĕрĕрех. Вĕсем нумай ытларах чĕрĕрех, мĕншĕн тесен, нацилĕ тумпа витĕнсе хӳтĕленме май пур" (Сталин).

Çавăнпа та тăшмансен ирсĕр ĕçĕсем çинчен пĕр самантлăха та манмасăр, çак Конституци çине çырса çирĕплетнĕ правасене чăваш халăхĕ хăй аллинче çирĕп тытса пырса, малашне те тăшмансене пĕр хĕрхенмесĕр, коммунисăм тăвас ĕçре пĕтĕм вăйа хурса хастарлăн кĕрешмеле.

Т. В. Васильĕв.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Економсоветра

Ийулĕн пĕрремĕш çурийăхĕнче Економикă Совечĕ кулленхи хуçалăх ыйтăвĕсене чылай пăхса тухнă тата вĕсем тăрăх ҫивĕçлĕ решенисем йышăннă.

Економикă Совечĕ, 1938 çулхи 3-мĕш кварталта аш-какай хатĕрлес плана мĕнле тултарни çинчен ыйтăва пăхса тухса, Тутар, Чăваш тата Удмурт АСС Республикĕсенче тата Вологдă, Ленинград, Йарославль, Кирăв, Куйбышĕв, Тамбов, Курск, Свердловск облаçĕсенче аш-какай хатĕрлес ĕç уйрăмăнах çителĕксĕр пулса пынине паллă тунă.

Аш-какай хатĕрлес плана çителĕксĕр тултарса пыни Заготовкăсен Халăх Комиссариачĕ начар ĕçленинчен килет, çавăн пекех тата нумай тĕлсенче райĕçтăвкомсемпе йалсовечĕсем вылЯăх-чĕрлĕх хатĕрлес ĕçе активлăн пулăшманнинчен те килет.

Аш-какай хатĕрлес плана тултарассине пурнăçа кĕртес шутпа Економсовет Заготовкăсен Халăх Комиссариатне, республикăсен Халăх Комиссарĕсен Совечĕсене тата край(обл)ĕçтăвкомсене ку ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе чылай организациллĕ ĕçсем тума хушса хăварнă. Уйрăмăн илсен, пĕтĕм колхозник килĕсем тата уйрăм хуçалăхсем хăйсен обйазательствисене мĕнле тултарса пынине талкăшпех тĕрĕслесе тухма, недоимкăсене шыраса илес тĕлĕшпе ийуль уйăхĕнче вуншар кунлăх заданисем парса тухма т. ыт. те тума хушнă.

Економсовет Совет Контроль Комиссине çакна тума хушнă: августăн 1-мĕш тĕлне аш-какай хатĕрлес ĕçе тĕпрен лайăхлатассине пурнăçа кĕртмен край(обл)ĕçтăвкомĕсен председателĕсемпе заготовкăсен халăх комиссариачĕсен уполномоченнăйĕсене Совет Контроль Комиссин бюро ларăвне чĕнсе илтерме, унта вĕсене отчот тутарма хушнă. Ку ĕçе августăн 15-мĕшĕнчен кайа йулмасăр тума хушнă.

(ТАСС).

Акушеркă Петровă

Ишлей пульницинчи акушеркă Анастасийă Григорйĕвнă Петровă йулташ акушеркă ĕçĕнче ĕçлеме пуçлани 25 çул тултарчĕ. 25 çул—вăхăт сахал мар. Таврари пĕтĕм ĕççынnисем йуратакан Анастасийă Григорйĕвнă ентĕ чылайах ватăлнă, унăн пуçĕнчи çÿçĕ те шуралнă. Апла пулин те ĕçре вăл çамрăк, ыванма пĕлмест, пульницăна пыракан çынсене чĕререн пикенсе тимлĕн пăхать, сахал мар ыйăх татса ĕçлет.

Анастасийă Григорйĕвнăна медицинăн вăтам шкулне пĕтерме çăмăл пулман. Унăн ашшĕпе амăшĕ рабочисем пулнă. Килте çăкăр татăкĕ çитсе пыман. Çавăнпа та Анастасийă Григорйĕвнă вĕреннĕ хушăрах тĕрлĕрен вырăнта ĕçленĕ.

1903 çултан пуçласа вăл Хусанти гимназинче вĕренет. Çак вăхăтра РОКК организацине кĕрет, унта [illegible] 1905—1907 çулсенче вăл çар госпиталĕнче медсестра пулса ĕçлет. 1907 çулта Анастасийă Григорйĕвнăна Спасск уйесĕнчи Войкинă пульницине йараççĕ, кунта вăл чечче шатрипе (натуральная оспа) кĕрешес йенĕпе халăх хушшинче пĕтĕм вăйне хурса ĕçлет. 1908—1809 çулсенче холерă сиксе тухсан, вăл çак хăрушă чирпе кĕрешнĕ çĕрте хăйĕн пысăк паттăрлăхне кăтартать. 1909 çултан пуçласа 1911 çула çитиччен Анастасийă Григорйĕвнă Хусанта „Хĕрлĕ Хĕрес" обшчининче хирург сестри пулса ĕçлет. 1911 çулта ăна ссыпной тифпа кĕрешме Йетĕрне уйесĕнчи Томкинă йалне хăй тĕллĕн ĕçлекен пункта йараççĕ. 1912—1913 çулсенче РОКК-ăн Хусанти обшчинин лечебницинче акушер пайĕнче ĕçлет. 1913 çулта Хусанти акушер шкулне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн, вăл Мăн Сĕнтĕр пульницинче акушеркăра ĕçлеме тытăнать. 1919 çултан пуçласа пĕр таталмасăр Ишлей пульницинче ĕçлет.

Петровă йулташ халăхшăн, халăх сывлăхĕшĕн пĕтĕм вăйне, пултарулăхне парать.

— Пурнăç кĕрешÿре, ĕçре пулса пычĕ. Ĕççыннисемшĕн епĕ хама манса кайса ĕçлерĕм. Епĕ çемйелĕ пулаймарăм, анчах куншăн пăшăрханмастăп, мĕншĕн тесен манăн çемйе—пĕтĕм совет халăхĕ, уншăн епĕ 35 çул ĕçлерĕм, малала та ĕçлетĕп,—тесе калать Анастасийă Григорйĕвнă хăйĕн пурнăçне пĕтĕçтерсе.

Вăл хăйĕн кунçулĕнче питĕ нумай çынна чи кирлĕ вăхăтра пулăшнă, питĕ нумай çынăн пурнăçне сыхласа хăварнă. Чи йăвăр вăхăтсенче чи йăвăр чирсемпе кĕрешме вăл чăн-чăн паттăр пек фронта кĕрсе кайнă. Вăл пĕрре мар вилĕмпе хире-хирĕç тăрса, упа кĕрешсе, ăна çĕнтерне.

Анастасийă Григорйĕвнă халăх хушшинче культурă сарас тĕлĕшпе нумай ĕçлет. Ĕççыннисене пурăнма, сывлăха сыхлама, чир-чĕрсемпе кĕрешме вĕрентет. Ăна пурте йуратаççĕ, вăл каланине пурте итлеççĕ.

Петровă йулташ чылай чух хăйне-хăй те пачах манса кайса ĕçленĕ. Вăл виçĕ çулти Таньă йатлă тăлăх хĕре усрама илсе, ăна тăван амăшĕ пек пăхса çитĕнтернĕ. Таньă халĕ Хусанти педагогикă институтĕнче II мĕш курсра вĕренет.

Ишлей районĕнчи ĕççыннисем пайан, Петровă йулташ йалти акушеркă ĕçĕнче ĕçлеме пуçлани 25 çул тултарнă кун, Анастасийă Григорйĕвнăна чĕререн ырă сывлăх сунаççĕ.

Ишлей районĕнчи сывлăх пайĕн пуçлăхĕ
Т. Г. Илларионăв.

Стаханăвĕц—общественник

Георгий Сольникăв йулташ Куславкка комбинатĕнче иккĕмĕш çул ĕçлет. Малтанах вăл сборшчик пулса ĕçленĕ. Хальхи вăхăтра Сольникăв йулташ станок çинче ĕçлет. Йаланах тăрăшса вĕреннипе вăл станок техникине лайăх вĕренсе çитнĕ. Станокне лайăх тытать, аварисем пулмаççĕ, простойсем те ун айăпĕпе пĕрре те пулман. Ĕç вăхăтне тĕрĕс организациленипе плана пĕрмайах тултарса пырать.

Сольникăв йулташ производствăра стаханăвла ĕçленипе пĕрлех общественăллă ĕçре те пример кăтартать. Рабочисене хаçат-журналсем вуласа парать, вĕсем хушшинче подпискă пухать. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали кампани вăхăтĕнче Сольникăв йулташ ЧАССР Верховнăй Совечне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссии председателĕн заместителĕ пулса ĕçлерĕ.

М. Корнилăв.

Латви самольочĕсем Совет Сойузĕн чиккине пăсаççĕ

БИГОСОВО, ийулĕн 15-мĕш. Ийулĕн 13-мĕшĕнче Себеж тата Бигосово районĕнче Латви самольочĕ, истребителсем йевĕрлĕскер, Латвирен ССР Сойузĕн территорийĕ çине вĕçсе каçса, совет чиккине икĕ хутчен пăснă.

Советăн чикĕри влаçĕсем пĕлтернĕ тăрăх йулашки вăхăтра Латви самольочĕсем Совет Сойузĕн чиккине пĕрре кăна мар пăснă.

***

ТАСС илнĕ сведĕнисем тăрăх, ССР Сойузĕн Латвири полпредне çак ĕç пирки Латви правительствине протест пама хушнă.

(ТАСС).

Утă парса татрĕ

КĂШАРКАССИНЧИ (Çĕрпÿ р.) „Пионер" колхоз утă çулса пĕтерсе типĕтнĕ хыççăнах, государствăна паха утă парса татрĕ.

Кăçал колхоз вылЯăхсем вальли утă нумай хатĕрлерĕ. Пурĕ 60 гектар клевĕр, викă 60 гектар тата çаран ути çулнă. Утă колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх валеçме чылай пулать.

Халь бригадăсем ыраш вырма тухма хатĕрленеççĕ. Туса çитереймен вак-тĕвек ĕçсене тăваççĕ.

А. Иванов.

Кувшинкăри канмали çуртра

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Ваç. Ваçкин

ИРХИНЕ

Тухăçра сăрланать çутă шуçăм,
Тÿпене ак çĕкленчĕ хĕвел.
Çĕнĕ кун! Чечен ир сывлăш уçă.
Çĕнĕ кун! Ир лăпкать ÿт-пĕве.

Тĕлĕретчĕ çут кÿлĕ, пит шăпчĕ
Таврара, ак хумханчĕ хăва.
Çутă иршĕн йурлать йурăç-шăпчăк,
Çакăнтах пуль ун çурчĕ-йăва.

Чипер хĕр трактăристкă та анчĕ,
Халь вăл уçă шывра чÿхенет.
Кÿлĕре çут хумсем ункăланчĕç.
Хумлă шыв çырана çĕкленет.

Çил хускалчĕ, хирти тырăпулă
Хумханать. Тырă хÿхĕм, аван.
Чечен иршĕн, хĕвелшĕн хăйулăн
Шăпăр-шăпăр ал çупрĕ вăрман.

Сывлăмпа йалтăрать аслă улăх,
Курăк сывлăм сыпать ир çинче.
[illegible]
[illegible]

Хир карапĕ—мухтавлă комбайăн
Ишме тухрĕ тырпул тинĕсне.
Комбайнеркă, кăвак куçăм Маньă
Йăл кулса тытăнать хăй ĕçне.

Пÿлмере туллийех пирĕн тырă,
Ирĕк, савăк пире пурăнма.
Пурнăç, пурнăç! Хавасла ес, ырă,
Ку куна нихăш ĕмĕр курмаç.

Ир-ирех кăшкăрать репродуктăр:—
Ырă ир!—тет Мускав, ыр сунать.
Аслă Сталин, çутатрăн çап-çутă,
Илемлетрĕн ес пирĕн куна!

Сынсене асапран çăлтăн есĕ,
Телĕнтертĕн аспа та ĕçпе.
Çак çĕршывăн кашни—пур кĕтесĕ
Чечекленчĕç сан тивĕçлĕхпе.

Çĕнĕ пурнăç пире туса патăн,
Патăн ес çак хаваслă куна.
Йуратáтпăр, чунтан кăмăллатпăр
Есĕ çырнă ылттăн саккуна.

Типĕ мар халь текех пушă хир те,
Улăштаратпăр шывсен йуххине.
[illegible]
Ĕп илтĕп ачасен кулăлине.

Тÿпе йанкăр таса, тÿпе çийĕн
Хурçă жайак иртет кĕрлесе.
Хурала хапарать истребителл
Пирĕн ĕмĕтсене çĕклесе.

Çакăн пек ман çĕршывăн çут ирĕ,
Халăх кĕтнĕ йалан çак куна.
Шав шыранă телей, ырлăх, ирĕк,
Уншăн тăкнă нумай чĕр йуна.

Çут кăвар сирпĕтсе çут Октябĕр
Çитрĕ, шăлчĕ харам пырсене.
Нимсĕрех пулмасть пурăнăç чапĕ,
Мĕн чул йулчĕç ыртса хирсене.

Ирĕкшĕн çунатланнă çĕршывăн
Чи хĕрÿ, паттăр ывăлĕсем
Çак иршĕн, çак çут куншăн пуç хунă,
Хирсене выртса йулнă вĕсем.

Чечекленчĕç. Халь чаплăх,
мухтавлăх
Сÿрет çав уй-хирсен çийĕнче.
Йуратса асăнать пĕтĕм халăх,
Мухтать паттăрсене йурринче.

[illegible]
Пирĕнте пĕтĕм ырлăх, телей.
Йурлăр, йурлăр хаваслă хĕр-ывăл,
Питсем çиçчĕр çап-çут хĕвелле!

Йамаш, Шăхасан р-нĕ.

АТĂЛ ÇИНЧЕ

Миçе поет, миçе историк куçĕ
Тинкернĕ-ши çут Атăлăн сăнне.
Кашни çын кăмăлнех ун сăнĕ уçĕ,
Кашни тинкерĕ çут хумсен шавне.

Кашни поет, кашни прозаик чыслăн
Ерешлĕ унăн чĕнтĕр кĕперне.
Ун анлă кăкăрне тулли хаваслăн
Ыталĕç сывăх тус пек кулленех.

Ун хумĕсен кĕввийĕнче историк
Туйĕ сĕм аваллăхăн йĕрне.
Вăл шутлĕ çав: истори çулĕ тарăн,
Хăвачĕ те ун суламлă, кĕрнек.

Анчах та çутă шанчăка истори
Хура йатпа асилмĕ нихăçан.
Пугачовпа Разин утни сан тăрăх
Кивелмĕç, йулмĕç манăçа.

Пайанхи кун çут шанчăклă етемлĕх,
Санри аваллăха асилнĕ май,
Хăватлăхна лăпкать пурнăç пек тимлĕн,
Чапа çĕклет тивлетлĕн асăнма.

Кашни етем, кашни поет, историк
Кураççĕ халь сан иксĕлми вăйна.
Çĕнелчĕç хуласем, йалсем сан тăрăх,
Хăватлăхшăн мухтаç кашни сана.

Илйич лампи кашни тĕлте çап-çутă,
Вăл йăлтăрать сÿнми çут çăлтăр пек,
Çурхи сăн пек кашни çын тулăх, тутă,—
Туллин пурнатпăр Сталин ăшшипе.

Кĕç пилĕк тинĕспе пĕрлешĕн, Атăл,
Аслă çулпуç тивлечĕпе:
Ун ăшшипе ÿсет хаваслăх,
Чечекленетпĕр унăн ăшшипе.

Çавăнпалах кашни поет, историк,—
Сăнанă май çут Атăл чĕнтĕрне,
Туйать: утатпăр чĕнтĕр кĕпер тăрăх
Мăн телейпе—коммунисăм патне.

М. Йастран.

Пурте çыранчĕç

ЙЕЛЧĔК. Кĕçĕн Патăрйелĕнчи колхозниксем çĕнĕ займа пурте çыранса илчĕç. Пелагейă Арбузăвă, Феодосийă Каринина, Иван Каринин, Евстигней Иванов йулташсем 50-шар тенкĕлĕх, колхозĕпе 1030 тенкĕлĕх займ çыранчĕç. Халĕ колхозра çĕнĕ займшăн укçа пухма пуçланă.

Й. Пчелков.

Çулйĕр участкинче

Бригадă тăрăшса ĕçлет. Тивĕш колхозĕ (Ишлей районĕ) çулйĕр строительствинче йаланах ĕçлеме бригадă организациленĕ. Ку бригадă ĕçре пример кăтартать. Вăл планна кăтартнă ĕçсене пурнăçланă, çул участкисем пур çĕрте те çатма пек йака, вĕсене лайăх пăхса тăраççĕ. Çак кунсенче бригадă 100 кубла метр хăйăр турттарса çул çине сарчĕ. Халĕ йал варринче пысăк пĕвĕ тума тытăнчĕç, ăна вальли 35 кубла метр чул хатĕрлесе турттарчĕç те ĕнтĕ.

Л. Петров.

О. Артемйĕв.

Совет Сойузĕнчи пысăк велотур

Велосипедлă ăмăртусен историйĕ çитмĕл çула йахăн ĕлĕкрех пуçланнă. 1869 çулта Францире велосипедиссен чи пирвайхи чупувĕ пулса иртнĕ. Вăл велосипедиссем Париж—Руан маршрутпа 120 километр чупнă. „Косторт йассем" (вăл вăхăтри йăвăçран тунă велосипедсене çавăн пек каланă) çине ларса чупнин хăвăртлăхĕ çуран çын хăвăртлăхĕпе пĕр пекех пулнă. Велочупура çĕнтернĕ англичанин Мур 120 километр тăршшĕне 10 сехет те 45 минутра тухнă. Ун чухне çак хăвăртлăхпа чупмашкăн та çыннăн „слонăнни пек вăй та упăтынни пек правурлăх" кирлĕ пулнă. Кайарахпа вăрăм çула чупма пуçланă. Çавăн пек вăрăм велочупусем Францире (1891 çулта Париж—Брест—Париж маршрутпа 1200 километр), унтан тата Российăра (1895 çулта Мускав—Петербург маршрутпа 720 километр) пулса иртнĕ. Тĕнчери ăмăртулă чи пысăк чупу 1903 çулта пулса иртнĕ, ун чухне велосипедиссем „Франци йĕри-тавра" 5000 километр тăршшĕ чупнă.

Совет Сойузĕнчи велосипедиссен пысăк ăмăртувĕ 1937 çулта пулса иртнĕ. Ун чухне Мускав—Кийĕв—Минск—Мускав урлă 2500 километр тăршне тăсăлса ункă пек выртакан маршрутпа чупнă. Пĕрремĕш совет велотурĕнче орденоносец Михаил Рыбальченко (Одессă, „Динамо" спорт обшчĕстви) çĕнтернĕ. Вăл чупун пĕтĕм вуннилĕк етапне 94 сехет те 04 минут та 58 секундра чупса тухнă, вăтам хăвăртлăхĕ—сехетре 26,6 километр пулнă. Пĕтĕм командине мала тухас тĕлĕшрен илсен, пĕлтĕр динамăвĕцсем, çул машинисен ушкăнĕне Харькăври Хĕрлĕ Çар сурчĕн команди çĕнтернĕ.

Мускава çитме тухнă 126 велосипедисран 82-шĕ каламасăр çук пысăк çула ăнăçлăн чупса тухса финиша çитнĕ.

Хальхи вăхăтра Ленинла комсомол 20 çул тултарнă йатпа организациленĕ иккĕмĕш пысăк совет велотурĕ — кăçал çулахи спорт çезонĕнче тĕп вырăнта тăракан ĕç пулса тăрать.

Иккĕмĕш велотур маршрутне 5 етап хушса ÿстернĕ, 3200 километра çити вăрăмлатнă. Чупу августăн 6-мĕшĕнче Мускавра „Динамо" стадионĕ çинче Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ—„Динамо" спартакиадин йубилейлă ăмăртувĕ уçăлнă кун пуçланать. Маршрут: Тулă—Орйол—Севск—Кролевец—Нежин—Кийĕв—Чернигăв—Гомĕл—Бобруйск — Минск—Могильов — Витебск — Опочкă — Псков—Лугă—Ленинград— Новгород — Вышний— Волчок — Калинин—Мускав пункчĕсем урлă тăсăлса выртать. Финиш августăн 29-мĕшĕнче Мускаври ипподромра пулать. Севскра, Кийĕвра, Минскра, Ленинградра велосипедиссене пĕрер кун канма параççĕ.

Гонкă (чупу) условийĕсем тăрăх пысăк совет велотурĕнче пулма çĕршыври чи лайăх велосипедиссене 100 çынна ирĕк параççĕ. Вĕсенчен 15 командă пулать, кашни командăра — 6 çын. Кусемсĕр пуçне тата 10 велосипедис хăйсем мала тухассишĕн ăмăртма хутшăнаççĕ. Велотур условийĕсем тăрăх кашни велосипедис совет производствинче туса кăларнă велосипедпа чупма тивĕç. 20 етапран кашни етап хăйне уйрăм чупу пек пулса тăрать. Велотурта кам çĕнтернине пĕтĕм етапсенче чупса чи лайăх вăхăт кăтартнă тăрăх палăртаççĕ.

Велотурăн техникăллă хăватлăхĕ сехетре 24 километр пулмала. Анчах велотурта пулакансем пурте вăл нормăна нумай хыçăла тăратса хăварĕç тесе шутлама пур сăлтавсем те пур. Çĕнтерекенĕн результачĕ пĕлтĕрхинчен çÿлерех пуласса кĕтме пулать.

Чупу лидерĕ, урăхла каласан, Мускавран тухна хыççăн çул çинче чи кĕске сруксемпе пыракан велосипедис хисеплĕ хĕрлĕ майкă тăхăнать.

ССР Сойузĕнчи велотурăн чи лайăх ăстаçĕсем пысăк совет велотурне хутшăнма вăйлăн хатĕрленеççĕ. Белоруççире республикăри велотур пулса иртнĕ, унта 1212 километр тăршшĕне чупса Борис Большаков мала тухнă. Мускавра, облаçри велочупура Сергей Вершинин çĕнтернĕ. Украинăри велотурта 2400 метр тăршшĕне чупса Михаил Рыбальченко çĕнтернĕ.

Платон Ипполитăв.
Спортăн тава тивĕçлĕ маçтарĕ, орденоносец.

МОПР ĕçне вăйлăлатăр

Пайан ийулĕн 18-мĕшĕнче Испани халăхĕ фашисăма хирĕç кĕрешме пуçлани икĕ çул тулчĕ. Икĕ çул хушшинче Испани халăхĕ ирĕклĕхшĕн, фашисăм тискерлĕхне кураймасăр çирĕп çапăçса тĕнчери ĕçхалăхне савăнтарчĕ, Испани халăхĕ фашиссем пуçарнă тискер вăрçăпа сахал мар сийен курчĕ. Фронтра геройсем, тылра ваттисемпе ачасем, çав шутранах хĕрарăмсем, сахал мар асапланса вилчĕç.

Çапах та Испани халăхĕн вăйĕ, хастарлăхĕ ÿссех пырать. Испани халăхĕ фашиссене çĕнтеретех.

Испанири фашиссен тĕрмисенче ларакан революционерсемпе вăрçăра вилнĕ революционерсен çемйисене пулăшассине пирĕн вăйлăлатмала, МОПР организацийĕсене çирĕплетмеле.

Чăваш республикĕнче МОПР йачейкисем 589, вĕсенче 17.478 çын членра тăрать. Шупашкарта 139 йачейкă, унта 4300 член. МОПР укçи республикĕпе 19.203 тенкĕ (Шупашкарта 12.428 т., районсенче 6.775 т.) пухнă. Ку цифрăсене тата темиçе хут ÿстермелле.

Ф. Тимофейĕв.

Инкубатăрпа чĕпĕсем кăларни

Кăçал Чăваш республикĕнче инкубатăрпа чĕпĕсем кăларасси аван иртнĕ.

Вăрнарти станцă инкубатăрпа 28.873 чăх чĕппи кăларнă. Вĕсенчен 23.273 чĕпне колхозниксемпе йединоличниксене, 5.600 чĕпне чăх-чĕп ĕрчетекен фермăсене сутнă.

Вăрмарти станцă 19.078 чĕпĕ кăларнă. Вĕсенчен 15.406 чĕпĕне колхозниксемпе йединоличниксене, 3.672 чĕпĕне фермăсене сутнă.

Патăрйелĕнчи станцă 10.782 чĕпĕ кăларнă. Вĕсенчен 8.692 чĕпĕне колхозниксемпе йединоличниксене, [illegible] чĕпĕне фермăсене сутнă.

Манăн сĕнÿсем

Чăваш орфографине щ, э, ю, я, ъ, ь саспаллисене кĕртни усăллă. Çапла туни чăваш чĕлхине пуйанлатма, сăмахсене тĕрĕс çырма пулăшать.

Проект тăрăх, пирĕн алфавитра 39 саспалли пулмала. Ман шутпа 36 саспалли çеç хăвармала. Мĕн тума кирлĕ пире Ť, Ль, Нь саспаллисем? Епĕр вĕсемсĕрех лайăх çыратпăр вĕт: каять, Лява, Микăнь çырсан нимĕн те улшăнмасть.

Проектра чăваш чĕлхине урăх чĕлхерен тахçанах кĕрсе улшăннă сăмахсене йанăраман хупă саспаллисемпе çыраççĕ, тенĕ (пасар, сут, сат). Ман шутпа йанăракан хупă сасăсемпех çырмала (базар, суд, сад).

Проектра: ву-ла-ççĕ, епĕ-ччĕ,—тесе кусарма хушать. Вулаç-çĕ, епĕччĕ тесе кусарсан аван пулмĕ-ши? Манăн сĕнÿ—çапла кусармала.

Арх. Краснов.

Трак р-нĕ, „Коммунисăм çулĕпе" хаçат редакцийĕ.

Суд

Арăмне вĕлерекен

Баскакри вăрман пунктĕнче ĕçлекен механик Николай Долгов ийунĕн 26-мĕшĕнче ĕçсе ÿсĕрĕлнĕ те вăрманта хăйĕн арăмне Йелизаветăна хытă хĕнесе вăрманах пăрахса хăварнă. Йăвăр суранланнă Йелизаветă тепĕр кун ирхине 5 сехетчченех вăрманта выртнă. Ăна ирпе вăрман касма кайакан çынсем курса Пашăйелĕнчи пульницăна илсе кайнă. Йелизаветă унта ийунĕн 29-мĕшĕнче вилнĕ.

Шăмăршă районĕнчи халăх сучĕ, çак тискер ĕçе пăхса тухса, Долгова Уголовнăй Кодексăн 142 статйин иккĕмĕш пайĕпе айăплăса 8 çул хушши тĕрмере хупса усрамала, 3 çул хушши суйлав прависĕр хăвармала приговăр йышăнчĕ.

Й. Филиппăв.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан тир-сăран савăчне

бухгалтĕрсем, счетоводсем

ТАТА

наççир кирлĕ

Ворошиловская ул. д. № 27.
2—2

Чăвашвăрманпромсойузĕн тавар тăратакан тата сутакан кантурне

ЙАЛАН ĔÇЛЕМЕ:

Плановик-економист
Консультант (оборудовани тăрăх)
Бухгалтĕр (расчот сĕтелĕн)
Машинисткă секретар

КИРЛĔ

Адрес: г. Чебоксары, ул. Кадыкова, 7. Чувашлеспромснабсбыт.

Уполномоченный Чувашглавлита № 369 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 881. [illegible]